Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАЙ 20 ЕРНЕКУН 113 (4926) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

Влаçăн Верховнăй оргăнĕсене—халăхăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене!

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен депутатне суйлама кандидатсем тăратасси пĕрмайăх сарăлса пырат.

Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсене депутата суйлама палăртса, пысăк йышлă пухусенче рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем—партири тата партире тăман большевиксем—тухса хĕрӳллĕ сăмахсем калаççĕ. Вĕсем хамăр тăван çĕршыв хăватлă державă пулни çинчен, коммунисен партийĕ йертсе пынипе ĕçсыннисем капиталисăм пусмăрĕнчен хăтăлни çинчен, пуйан та культурăлă пурнăç туса панă Ленин—Сталин партин мухтавлă ĕçĕсем çинчен калаççĕ.

Чăваш республикĕнчи ĕçсыннисем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидата чи малтан аслă **Сталин** йулташа тăратаççĕ. Сталин йулташăн йачĕпе пĕрлех Елĕк районĕнчи А. А. Жданăв йачĕпе тăракан колхозниксем, Шупашкарти авторемонт савăтĕнчи рабочисем, типографинчи рабочисем хăйсен пухăвĕсенче **Молăтăв, Каганович, Жданăв, Калинин, Ворошилăв, Йежов, Андрейĕв** йулташсене РСФСР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидата тăратаççĕ. Халăхсен шанчăклă лидĕрĕсен йачĕсемпе йупапарах РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама чăваш халăхĕн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсене, халăх ĕçĕшĕн, социалисăм ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйхала хурса ĕçлекенсен йачĕсене асăнаççĕ.

Елĕк районĕнчи ЧАССР Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата парти райкомĕн пĕрремĕш секретарне Меценатăвă йулташа, Шупашкарта РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама хула совет председателне Калинкина йулташа, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама пединститут директăрне Харитонăв йулташа, Патăрйел районĕнчи Пушкин йачĕпе тăракан колхоз председателне А. М. Михайлăвă йулташа, Турханти (Турхан районĕ) туллимар вăтăм шкул учителне В. С. Кириллăв йулташа, Шăхасан районĕнчи „Чуваш ЦИК“ тата „Память Ильича“ колхозникĕсем депутата суйлама МТС-чи чи паллă трактăриса, бригадир - стаханăвĕц Тимофейĕв йулташа тăратнă.

Чăваш республикĕнчи ĕçсыннисем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, совет халăхĕн телейлĕ те, савăнăçлă пурнăçĕшĕн, пур йышши тăшмансене хирĕç пĕтĕм вăйа хурса кĕрешекенсене кандидата палăртаççĕ.

Сталин йулташ каланă:

„Суйлавçăсем хăйсен депутачĕсенчен çакна ыйтмала: депутатсем хăйсен задачисен çӳлĕшĕнче тăччăр, вĕсем хăйсен ĕçĕнче политикăлă обывателсен картне анса ан ларччăр, вĕсем Ленин сăнарлă политикăлă дейателсен вырăнче тăччăр, вĕсем Ленин пек йар-уçă та паллă дейателсем пулччăр, вĕсем Ленин пекех кĕрешӳре нимрен хăраман тата халăх тăшманĕсене нимĕн хĕрхенмен çынсем пулччăр, вĕсем ĕç йăвăрланма пуçласан тавра-курăмра мĕнле те пулин хăрушлăх палăрса тухма пуçласан, кирек мĕнле хăраса ӳкесрен те, кирек мĕнле хăраса ӳкес пеккипчен те Ленин пекех ирĕклĕ пулччăр, кăткăс ыйтусене татса панă çĕрте пур йенлĕ ориентаци тата пĕтĕм плюссемпе минуссене пур йенчен те учота илмеле çĕрте вĕсем, Ленин пекех аслă та васкамасăр тăвакансем пулччăр, вĕсем Ленин пекех тĕрĕс те тӳрĕ кăмăллă пулччăр, вĕсем хăйсен халăхне, ăна Ленин йуратнă пекех йуратччăр“.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем палăртнă чухне Сталин йулташăн çак кăтартуне асра тытаççĕ те ĕнтĕ ĕçсыннисем.

Социалисăмла революци пулни 20 çул иртнĕ вăхăтран Чăваш республикин сăнничĕ тĕпренех улшăнчĕ. Октаберти социалисăмла аслă революци тĕнчен ултăмĕш пайĕнче патша влаçне, капиталиссемпе помещиксене шăлса ывăтрĕ. Совет Сойузĕнче политикăлă правасăрлăха, нацилĕ пусмăра, чухăнлăха, капиталисăмла хуçалăх йĕркине, вырăс мар халăхсем хуçалăхпа культурă тĕлĕшĕнчен кайа йулнипе ĕмĕрлĕхех пĕтернĕ. Ирĕклĕ çĕр çинче Совет Сойузĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле чăваш халăхĕ хуçалăх, культурă тĕлĕшĕнчен гигантла утăмсемпе малала кайса пырат. ССР Сойузĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле чăваш халăхĕ формă йенчен нацилĕ, содержани йенчен социалисăмла культурă тӳрĕ. Фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандисене çапса аркатнă, вĕсене хирĕçле кĕрешӳ малашне те вăйлăн пымала.

Чăваш республикĕнчи ĕçсыннисем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем палăртнă чухне Чăваш республикин историлĕ ӳсĕмĕсем, историлĕ çитĕнĕвĕсем çинчен, çав çитĕнӳсене тăвас ĕçре пĕтĕм вăй-хăвата хурса кĕрешекен çынсем çинчен савăнса калаççĕ. Вĕсенчен чи лайăххисене—партипе совет организацисен руководителĕсене, хапрăк-савăтсенчи стаханăвĕцсене, колхозник-стаханăвĕцсене, интеллигентсене РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен депутатне суйлама палăртаççĕ.

Пирĕн çĕршывра ĕç тата наукăн çĕнĕ çыннисем,— партири тата партире мар большевиксем государствă дейателĕсем пулса тăраççĕ. Совет халăхĕ хушшинче ӳсĕ çитĕннĕ, кĕрешӳре писнĕ, тӳрĕ кăмăлă, талантлă çынсем пиншерĕн, мĕлйуншарăн шутланаççĕ. Çавăнпа та ĕçсыннисем влаçăн Верховнăй оргăнĕсене депутата суйлама кандидатсем палăртнă чухне халăх хушшинчи чи шанчăклă, чи пултарулă, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, Совет çĕршывĕнчи халăхсен телейлĕ те савăнăçлă пурнăçĕшĕн пĕтĕм вăй-хала хурса кĕрешекеннисене суйласа палăртрĕç.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама халăхăн чи лайăх ывăлĕсемпе-хĕрĕсене, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, рабочисемпе хресченсен ĕçĕшĕн, коммунисăм ĕçĕшĕн вăйа хурса кĕрешекенсене тăратар, коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокне тата ытларах çирĕплетер!

ССРС Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойузĕн пĕрремĕш маршалĕ Климент Йефремăвич Ворошилăв. Ăна Çĕрпӳ тата Турхан суйлав округĕсем тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Турхан суйлав округĕ

Турхан районĕнчи Турханти „Октабĕр“ колхозри колхозниксемпе колхозницăсен суйлав умĕнхи пĕрлехи пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

И. В. Сталинпа К. Й. Ворошилăв

тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Турикасри туллимар вăтам шкулти учителĕ

Василий Семенăвич Кириллăв

йулташсен кандидатурисене тăратнă.

Пухура 120 çын пулнă

Майăн 18-мĕшĕнче Турхан районĕнчи Турханти „Октабĕр“ колхозри колхозниксемпе колхозницăсен суйлав умĕнхи пĕрлехи пухăвĕ пулчĕ. Пухура РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем палăртасси çинчен сӳтсе йаврĕç.

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурă тăратас пирки калама колхозри бригадир Г. Т. Хураскин йулташ сăмах илчĕ. Вăл çапла каларĕ:

— Пирĕн РСФСР Верховнăй Советне депутата паллă çынсене, халăх ĕçĕшĕн кĕрешекенсене суйламала. Епĕ хам йенчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама пирĕн халăхăн çулпуçне, пирĕн Конституцине туса паракана Иосиф Виссарионович Сталин тата унăн çывăх соратникне, пирĕн хурçă пек çирĕп Оборонă Халăх Комиссарне, Совет Сойузĕн пĕрремĕш маршалне—Климент Йефремăвич Ворошилăв йулташсен кандидатурине тăратма сĕнетĕп.

Епĕ пирĕн округри пур суйлавçăсене те çак кандидатсемшĕн тăма чĕнетеп,—терĕ вăл.

Хураскин йулташ сĕнĕвне ырласа пухура 7 çын тухса каларĕç.

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурă тăратас пирки И. А. Кудрйашов колхозник сăмах илчĕ. Вăл ЧАССР Верховнăй Советне депудата суйлама Тури-касри тулли мар вăтам шкулти учителĕн Васçилий Семенăвич Кириллăв йулташ кандидатурине сĕнет.

В. С. Кириллăв йулташ районра паллă, хастарлă учител шутланат. Колхозниксем хушшинче активлăн ĕçлет, колхоз стройĕшĕн çирĕппĕн кĕрешет.

Колхозниксен пухăвĕ çапла йышăнчĕ:

Турханти „Октабĕр“ колозри колхозниксемпе колхозницăсен пĕрлехи пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама пурте пĕр кăмăллă пулса, пирĕн халăхсен çулпуçне, пирĕн Конституцине туса паракана Иосиф Виссарионович Сталин тата Оборонă Халăх Комиссарне, Совет Сойузĕн пĕрремĕш маршалне—Климент Йефремăвич Ворошилăв йулташсен кандидатурисене тăратас.

Пĕрлехи пуху И. В. Сталин тата К. Й. Ворошилăв йулташсенчен Патăрйел суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтат.

Пуху ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Турхан суйлав округĕ тăрăх Тури-касри тули мар вăтам шкулти учителĕн В. С. Кириллăв йулташ кандидатурине тăратат.

Пĕрлехи пуху В. С. Кириллăв йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата Турхан суйлав округĕ тăрăх суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтат.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем тăратни çинчен ытти материалсем 2-мĕш страницăра.

Аслă шкул работникĕсен Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш канашлăвĕнче пулнисене Кремĕльре йышăнни

Йышăнура И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. И. Микойан, В. Йа. Чубарь, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов йулташсем пулнă.

Мускавра аслă шкул работникĕсен Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш канашлăвĕ тăватă кун хушши ĕçленĕ. Канашлура Совет аслăлăхĕн чи паллă представителĕсем пулнă. Канашлу совет аслă шкулĕсен ĕçĕсене лайăхлатса, вăйлатса йарас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тума палăртнă.

Майăн 17-мĕшĕнче каçхине Кремĕльри Пысăк дворецра канашлура пулнисене йышăннă. Йышăнăва ПСК(б)П Тĕп Комитечĕпе ССР Сойузĕн правителстви тунă.

Йышăнура пулнисем Сталин, Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Микойан, Чубарь, Жданăв, Йежов йулташсене тăвăллăн оваци туса кĕтсе илнĕ.

Аслă шкулсен ĕçĕсен Комитечĕн председателĕ Кафтанăв йулташ хăйĕн малтанхи сăмахĕнче Совет çĕршывĕ аслă шкул йенĕпе тунă çитĕнӳсем çинчен тата кĕрешсе илнисем çинчен калат. Вăл ПСК(б) Партин ленинла-сталинла Тĕп Комитечĕ, правителствă тата Сталин йулташ тата Молăтăв йулташ ССР Сойузĕнчи аслă шкулсен ĕçне лайăхлатас тесе тата вĕсене аталантарса пырас тесе калама çук тăрăшни çинчен уйрăмах палăртса калат.

Йышăнăва пухăннисем пурте ура çине тăрса Сталин йулташа тата Молăтăв йулташа саламласа тăвăллă оваци тăваççĕ.

Мускаври библиотекă институтĕнчи студенткă Макарăвă йулташ хĕрӳлĕ самах тухса калат. Вăл 600 пин студентсен йачĕпе партипе правителствă руководителĕсене çапла каласа шантарнă: „Епĕр „отлично“ тата „хорошо“ паллăпа кăна вĕренме пулатпăр“,—тенĕ.

Унтан Мускаври нефт институчĕн директăрĕ академик И. М. Губкин, Томскри индустри институтĕнчи профессăр Усăв йулташ, ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕсем профессăр Образцов тата профессăр Мачаварйани тата ытти йулташсем те тухса каланă.

Хăйсен сăмахĕсенче вĕсем Сталин, Молăтăв, Калинин, Каганович, Ворошилăв, Йежов, Жданăв, Микойан, Чубарь тата Угарăв йулташсене саламлаççĕ.

Сталин йулташ сăмах илет, ăна тăвăллăн оваци туса тата саламлă сăмахсем каласа кĕтсе илеççĕ.

Канашлура пулнисем Сталин йулташăн саламлă сăмахне пысăк тимлĕхпе итленĕ.

Алă çупни калама çук кĕрлесе тăрат, „Урра!“, „Сывă пултăр Сталин йулташ!“ тесе кăшкăраççĕ.

Йулашкинчен Сталин йачĕпе тăракан промышлĕннăç академинче вĕренекен студент, ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ Стаханăв йулташ сăмах тухса каланă.

Стаханăв йулташ Сталин йулташа саламласа калат, вăл каланă чухне йышăнура пулнисем калама çук хыттăн алă çупнă.

Йышăнура пулнисене ваљљи пысăк концерт лартса панă.

(ТАСС).

Сталин йулташ Кремĕльре аслă шкулсен работникĕсене йышăннă чухне 1938 çулхи майăн 17-мĕшĕнче каланă сăмах

Йулташсем!

Аслăлăхшăн, вăл чечекленсе ӳссе пырассишĕн, аслăлăх ĕçĕнчи çынсен сывлăхĕшĕн тост калама ирĕк парăр.

Аслăлăх чечекленсе пырассишĕн, халăхран уйăрăлса тăман, хăйне халăхран инçетре тытман, халăхшăн ĕçлеме хатĕр тăракан, аслăлăх кĕрешсе илнисене пĕтĕмпех халăха пама хатĕр тăракан, ирĕксĕр мар, ирĕккĕн, хавассăн халăхшăн ĕçлекен аслăлăх чечекленсе пырассишĕн. **(Алă çупаççĕ).**

Аслăлăх чечекленсе пырассишĕн хăйĕн ватă та хисепе тухнă руководителĕсене хăйсене-хăйсем мăнкăмăлланса аслăлăх жрецĕсен хуппи ăшне, аслăлăх монополисĕсен хуппи ăшне хупăнса ларма паман, аслăлăхăн ватă работникĕсемпе аслăлăхăн çамрăк работникĕсен сойузĕн пахалăхне, хакне, вăйхăватне ăнланакан, аслăлăхăн пур алăкĕсене те хамăр çĕршывăн çамрăк вăйĕсене ваљљи ирĕккĕн те хавассăн уçса паракан тата вĕсене аслăлăхăн çӳллĕшĕсене кĕрешсе илме май паракан, малашлăх аслăлăхри çамрăксенĕн пуласси йышăнакан аслăлăх чечекленсе ӳссе пырассишĕн. **(Алă çупаççĕ).**

Аслăлăх чечекленсе пырассишĕн,—унăн çыннисем, аслăлăхра пулса тăнă традицисен вăйне тата пахалăхне ăнланса тата вĕсемпе аслăлăх интересĕсемшĕн пĕлсе уçă кураççĕ, çапах та çав традицисен чурийĕсем пуласшăн мар, кивĕ традицисене, нормăсене, установкăсене, вĕсем кивелсе кайсан, вĕсем малала кайма чарса тăракашнисем пулса кайсан, çĕмĕрме хăйлăх, хăватлăх çитерекен, тата çĕнĕ традицисем, çĕнĕ нормăсем, çĕнĕ установкăсем туса пыма пĕлекен аслăлăх чечекленсе ӳссе пырассишĕн. **(Алă çупаççĕ).**

Аслăлăх хăйĕн ӳсĕмĕнче хăйулă та хăватлă çынсене сахал мар пĕлет, вĕсем, нимĕнле чăрмавсене пăхмасăр, нимĕнте пăхмасăр киввине çĕмĕрме тата çĕннине туса пыма пĕлнĕ. Аслăлăхăн çакăн пек çыннисем: Галилей, Дарвин тата ыттисем нумайĕшĕ пурне те паллă. Епĕ аслăлăхăн çавăн пек корифейĕсенчен пĕрин çинчен чарăнса тăрасшăн, вăл çавăнпа пĕрлех кучухнехи чи аслă çын пулса тăрат. Епĕ Ленина, хамăрăн учителе, хамăрăн воспитателе асра тытатăп. **(Алă çупаççĕ).** Аса илĕр-ха 1917-мĕш çула. Российăн общĕствăлă ӳсĕмне аслăлăхлă анализ туса, пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăва аслăлăхлă анализ туса Ленин унчухне,—кун пек лару-тăруран тухмали пĕртен-пĕр май Российăра социалисăм çĕнтерни пулат, тесе вывăд тунă. Ку вăл çав вăхăтри аслăлăх çыннисемшĕн нумайĕшĕсемшĕн пачах кĕтмен вывăд пулнă. Плеханăв, аслăлăхăн паллă çыннисенчен пĕрийĕ, унчухне Ленин çинчен: Ленин „аташат“, тесе йĕрĕнсе каланă. Ыттисем, аслăлăхăн унтан кайа мар паллă çыннисем,— „Ленин ухмаха йернĕ“, ăна ăста та пулин инçетерех пытарса хурсан аванрах пулĕччĕ, тенĕ. Унчухне Ленина хирĕç, ăна аслăлăха çĕмрекен çын вырăнне хурса, аслăлăхăн çыннисем пурте, пур тĕрлисем те уланă. Анчах Ленин йухăма хирĕç, киввишĕн тăракансене хирĕç кайма хăраман. Вара Ленин çĕнтернĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Акă сире аслăлăх çыннин, кивелнĕ аслăлăха хирĕç хăйулă кĕрешекенĕн тата çĕнĕ аслăлăх ваљљи çул хывакан тĕслĕхĕ.

Тата çапла та пулат,—хăш чухне аслăлăхпа техникăн çĕнĕ çулĕсене аслăлăхра пуриншĕн те паллă пулса тăракан çынсем мар, аслăлăх тĕнчинче пачах паллă мар çынсем, ахаљ çынсем, практиксем, ĕçри новатăрсем хываççĕ. Кунта сĕтел хушшинче Стаханăвпа Папанин йулташсем лараççĕ. Аслăлăх тĕнчинче палă мар çынсем, вĕсен учонăй степĕнсем çук, вĕсем хăйсен ĕçĕн практикĕсем. Анчах Стаханăв тата стаханăвĕçсем хăйсен промышлĕннăçри практикăлă ĕçĕпе унта пулнă нормăсене, аслăлăхпа техникăн паллă çыннисем тунăскерсене, кивелсе кайнăскерсене, ӳпĕнтерсе йани çĕнĕ нормăсене, чăн-чăн аслăлăх тата техникă хушнисемпе килĕшӳлĕ туса хуни камшăн паллă мар? Папанин тата папанинĕçсем куçса çӳрекен пăр çинче хăйсен практикĕпе хăйсен тĕп ĕçне тунă хушăрах, уйрăм ĕçсем тумасăрах, Арктикă çине кивĕлĕ пăхнине, кивелсе кайнăскерне ӳпĕнтерсе йани, çĕннине, чăн-чăн аслăлăх хушнипе килĕшӳлĕ туса хуни камшăн палă мар? Стаханăв тата Папанин аслăлăхри новатăрсем, пирĕн малта пыракан аслăлăхăн çыннисем пулса тăнине йышăнмасăр тăма кам пултарĕ?

Акă мĕнле „тĕлĕнмеле ĕçсем“ пулаççĕ тата аслăлăхра.

Епĕ аслăлăх çинчен кăларăм. Анчах аслăлăх тĕрлĕрен пулат. Епĕ калакан аслăлăха **малта пыракан аслăлăх** теççĕ.

Хамăрăн малта пыракан аслăлăх чечекленсе пырассишĕн!

Малта пыракан аслăлăхăн çыннисен сывлăхĕшĕн!

Ленинăн тата ленинисăмăн сывлăхĕшĕн!

Стаханăвăн тата стаханăвĕçсен сывлăхĕшĕн!

Папанинăн тата папанинĕçсен сывлăхĕшĕн! **(Алă çупаççĕ).**

Мускаври Сталински суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Иосиф Виссарионович Сталина палăртнă

Майăн 17-мĕшĕнче Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи ĕçсыннисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ пулса иртнĕ.

Канашлăва Лепсе йачĕпе тăракан савутри партире тăман рабочи Алексей Николайăвич Тӳпин уçнă. Чи малтан вăл Фрунзе йачĕпе тăракан савутри инженера Власăв йулташа сăмах панă. Уçăмла та хумханулă сăмахĕпе Власăв йулташ канашлăва РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Сталин йулташа палăртма чĕнсе каланă. Канашлура пулнисем унăн сăмахне нумайĕн оваци тупине пулнă. Вырăнсенчен партине тата Сталин йулташа чысласа саламлă сăмахсем каласа кăшкăрнă.

Стаханăвка Тӳренкăвă йулташ, учителница Лифанăвă йулташ, вăтă работница Дементăйăвă йулташ, инженер Григорйăв йулташ тата ыттисем те, канашлура тухса каласа, Власăв йулташ сĕнĕвĕшĕн тăнă.

Суйлав умĕнхи канашлура пулнă 1.050 представителĕ, хăйсен суйлав округĕнчи пур ĕçсыннисен ирĕкне палăртса, ĕçсыннисен пĕрлехи пухăвĕсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Сталин йулташа палăртни çинчен йышăннă решенисемпе килĕшнине пулни çинчен постановлени йышăннă.

Канашлу пысăк çĕкленӳпе Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă, вăл çырура Сталински суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма хăйне килĕшнине пама Сталин йулташран ыйтса çырнă. Çавăн пекех канашлу Сталин йулташ кандидатуришĕн тăма суйлавçăсене пурне чĕнсе каланине йышăннă.

Канашлу 179 çынтан доверенăйсен суйласа хăварнă, вĕсене Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен хушшинче ĕçлеме—хушса хăварнă.

(ТАСС).

Спискăсене тĕрĕслеме пуçларĕç

КАНАШ. Вакунсем йусакан савăтра РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлавçăсене хатĕрленĕ ĕç кунран кун вăйланса пырать. Пĕтĕм рабочисемпе работницăсем суйлав сакунĕсене вĕренеççĕ. Хăлĕ савăтри суйлавçăсен спискине туса пĕтерне. Суйлавçăсен спискисене йуна çĕр тăватă 39 çын ĕçлереç. Хăлĕ савăтра суйлавçăсен спискине пур суйлавçăсене те кĕртнине, йат, хушамат, хăш çулта çуралнисене мĕнле çыринне тĕрĕслес ĕç пуçланчĕ.

Д. Иванов.

Чехословаки писатĕлĕ Совет Сойузĕ çинчен

Чехословакири паллă писатĕл Иосиф Чапек, ССР Сойузĕнче Май уйавĕсенче пулнăскер, Чехословаки пичетĕнче Совет Сойузĕ çинчен калакан пысăк та хавхаланулă статйа пичетлесе кăларнă. Майăн 1-мĕшне уйавлани ăна калама çук хыттăн тĕлĕнтернĕ, унăн шухăшĕпе çавăн пек уйав „Совет çĕршывĕнче кăна пулма пултарат“.

Чапек çапла паллă тунă: пурнăçăн тĕрлĕ йенĕсем тăрăх тунă çитĕнӳсенчен тĕлĕнмесĕр тăма май çук, тенĕ. „Совет Сойузĕ,—тесе çырнă Чапек,—пурне те тума пултаракан çĕршыв пулса тăрат, мĕн чухлĕ малала кайатăн, унăн аслă малашлăхĕ çавăн чухлĕ çуттăн та туллийĕн курăнса тăрат“.

Вăл музейсем, театрсем, культурăла-социаллă учрежденисем, архитектурă произведенийĕсем, çĕнĕ çуртсемпе предприйатисем, тĕлĕнмеле пысăк пуйанлăх пулса тăраканскерсем, вĕсем тӳрех Советăн нумай мĕлйунлă халăхĕн алличе тăраканскерсем, ăна калама çук хыттăн тĕлĕнтерни çинчен кăтартса çырнă.

(ТАСС).

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен депутачĕсем пулма чăваш халăхĕ хăйĕн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене, партири тата партире мар большевиксене, хамăрăн тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕсене тăратат

Карач суйлав округĕ

Куславкка районĕнчи Калинин, Кирăв тата Каганович йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Михаил Иванăвич Калинина

тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Кирилл Димитрийĕвич Медйанина

палăртнă

Куславкка районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕ йышăннă

РЕЗОЛӲЦИ

Пухура 148 çын пулнă.

Епĕр, Калинин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем палăртасси çинчен сӳтсе-йавнă май, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Михаил Иванович Калинин йулташа палăртатпăр.

Пĕрлехи пуху М. И. Калинин йулташран Çĕрпӳ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтат.

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама ПСК(б)П членне, 1906 çулта çуралнăскере, социалисăм строительствинче активлăн ĕçлекен, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекен, Куславкка поçолăкĕнче пурăнакан, Куславкка райĕçтăвком председательне Кирилл Димитрийĕвич Медйанин кандидатурине палăртатпăр.

Калинин йачĕпе тăракан колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕ К. Д. Медйанин йулташран Карач суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтат.

* * *

Куславкка районĕнчи Кирăв тата Л. М. Каганович йачĕпе тăракан колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕсем те çакнашкал постановленисем йышăннă.

—о—

Куславкка районĕнчи Карл Маркс йачĕпе тăракан тата „Коммунар" колхозсенчи колхозниксем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Климент Йефремăвич Ворошилăва

тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Александр Иванăвич Пожеданăва

палăртнă

Куславкка районĕнчи Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен пухăвĕ йышăннă

РЕЗОЛӲЦИ

Пухура 192 çын пулнă.

Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсенчен РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутатсем суйлама кандидатсем палăртасси çинчен сӳтсе-йавнă хыççăн, пĕрлехи пуху çапла йышăнат:

Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен РСФСР Верховнăй Советне Çĕрпӳ суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама кандидата Сталин йулташăн çывăх тусне, соратникне, ССР Сойузĕн Оборона Халăх Комиссарне Климент Йефремăвич Ворошилăва палăртас. 1883 çулта çуралнă, ПСК(б) Парти членĕ, Мускавра пурăнат.

Пуху К. Й. Ворошилăв йулташран Çĕрпӳ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтат.

Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен Тĕрлеме суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама кандидата Александр Иванович Пожеданăва палăртнă. 1897 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Шупашкар хулинче пурăнат.

Пуху Пожеданăв йулташран Тĕрлеме суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтат.

Кипеч суйлав округĕ

Шăхасан районĕнчи „Чуваш ЦИК" тата „Память Ильича" колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Андрей Андрейĕвич Андрейĕв

тата

Никандăр Тимофейĕвич Тимофейĕв

йулташсен кандидатурисене палăртнă

Шăхасан. Майăн 18-мĕшĕнче „Чуваш ЦИК" тата „Память Ильича" колхозсен колхозникĕсемпе колхозницисен суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура малтан „Память Ильича" колхозри чи лайăх колхозник стахановец Павлăв йулташ сăмах туса каларĕ. Вăл Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйлама Андрей Андрейĕв йулташа тата Шăхасан МТС-чи паллă бригадир—стахановеца Никандăр Тимофейĕвич Тимофейĕв йулташа палăртма сĕнӳ парат. Колхозниксемпе колхозницăсем тата трактăриссем пĕрин хыççăн тепри сăмах туса каласçĕ. Вĕсем пурте Павлăв йулташ сĕнӳне хута кĕресçĕ.

„Чуваш ЦИК" тата „Память Ильича" колхоз колхозникĕсемпе колхозницисен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратасси çинчен сӳтсе-йавса, „Чуваш ЦИК" тата „Память Ильича" колхоз колхозникĕсен пухăвĕ çапла йышăнат:

1. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама ПСК(б)П Тĕпком çекретарне Андрей Андрейĕвич Андрейĕв йулташа тата Шăхасан МТС-чи трактăр бригадирне, паллă стахановеца,—1906 çулта çуралнă, партире тăмаст, Шăхасан йалĕнче пурăнат,—Никандăр Тимофейĕвич Тимофейĕва кандидата палăртас.

2. Андрейĕв тата Тимофейĕв йулташсенчен Кипеч суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма хăйсен килĕшӳне пама ыйтас.

—о—

Йелчĕк суйлав округĕ

Куславкка районĕнчи „Динамо" „Çĕнĕ пурнăç" тата Йежов йачĕпе тăракан колхозсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Николай Иванăвич Йежов

йулташа тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Герасим Иванăвич Иванов

йулташа палăртнă

Куславкка районĕнчи „Динамо" колхозри колхозниксен пухăвĕ йышăннă

РЕЗОЛӲЦИ

Пухура 180 çын пулнă.

Епĕр, „Динамо" колхози колхозниксем, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем палăртасси çинчен сӳтсе-йавма пухăнăскерсем, çĕнĕ Конституци тăвакана—халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа тăвансла, хĕрӳлĕ салам йаратпăр.

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Николай Иванăвич Йежов йулташа, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Герасим Иванăвич Иванов йулташа тăрататпăр.

Колхозниксен пухăвĕ Николай Иванăвич Йежов йулташран Çĕрпӳ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтат.

Пуху Г. И. Иванов йулташран Йелчĕк суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтат.

Патăрйел тата Туçа суйлав округĕсем

Патăрйел районĕнчи Татмăш йалĕнчи „Восток" колхоз членĕсемпе ĕççынни йединоличникĕсен пĕрлехи пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иосиф Виссарионович Сталин

кандидатурине тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Михайлăвă Аннă Михайлăвнă

кандидатурине тăратнă

ПАТĂРЙЕЛ. Майăн 18-мĕшĕ (телефон тăрăх). Татмăшри „Восток" колхоз членĕсемпе йединоличниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ чаплă уйав пулса тăчĕ. Колхозниксем вăйлă демонстраци туса пухăва хĕрлĕ йалавсемпе пухăнчĕç. Унта 230 çын пулчĕ. Вĕсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама кандидатсем тăратас пирки пысăк хастарлăхпа тухса калаçрĕç. Чи малтанах 58 çулхи колхозник-стахановкă Марийа Царевă йулташ тухса сăмах каларĕ. Вăл РСФСР Верховнăй Советне Патăрйел суйлав округĕнчен депутата суйлама Сталин йулташа, Туçа суйлав округĕнчен Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама Пушкин йачĕпе тăракан колхоз председательне—Михайлăвă Аннă Михайлăвнă йулташа сĕнчĕ. Царевă йулташ сăмахĕпе килĕшсе татах 10 колхозник тухса каларĕç.

Царевă йулташ сăмахĕ

Ĕлĕк пирĕн ирĕклĕ пурнăç пулман. Епĕр, хĕрарăмсем, пухăва та тухса курман. Халĕ епĕ стахановкă. Колхоза кĕнĕренпе лайăх пурăнакан пултăм. 1937 çулта хам пĕччен кăна 236 ĕçкунĕ туса 116 пăт тĕштырă илтĕм. Çавăнпа та пире лайăх пурнăç туса паракан, колхозниксене пуйан та культурлă пурнăç паракан Сталин йулташа РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăрататăп.

ЧАССР Верховнăй Советне Туçа суйлав округĕнчен депутата суйлама Михайлăвă Аннă Михайлăвнăна кандидата тăратма сĕнетĕп.

Пухăва пуçтарăннă колхозниксене, колхозницăсене, йединоличниксене тата ытти ĕçре ĕçлекенсене те епĕ тăратнă кандидатсене йышăнма ыйтатăп.

Патăрйел районĕнчи Татмăш йалĕнчи „Восток" колхоз членĕсемпе ĕççынни йединоличниксен пĕрлехи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пухура 230 çын пулнă.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем тăратасси çинчен сӳтсе-йавнă хыççăн, РСФСР Верховнăй Советне Суйламали Патăрйел суйлав округне тата Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Туçа суйлав округне кĕрекен Татмăш йалĕнчи „Восток" колхоз членĕсемпе ĕççынни йединоличниксен пĕрлехи пухăвĕ çапла йышăнат.

1. Патăрйел суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата совет халăхĕн тата тĕнчери пролетариатăн йуратнă çулпуçне, тĕнчере чи демократилĕ Конституци тăвакан Иосиф Виссарионович Сталин йулташа тăратас.

2. ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Михайлăвă Аннă Михайлăвнă йулташа, Пушкин йачĕпе тăракан колхоз председательне, — 1913 çулта çуралнă, комсомолкă, 1932 çултанпа колхоз председателĕ пулса ĕçлет, Патăрйел районĕнчи Шăхран йалĕнче пурăнат,—кандидата тăратас.

3. Иосиф Виссарионович Сталин йулташран Патăрйел суйлав округĕ тăрăх, Михайлăвă Аннă Михайлăвнă йулташран Туçа суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтас.

Çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермеле

КАНАШ. (хамăр корр.). Майăн 16-мĕшĕнче РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Канашри 721-мĕш номĕрлĕ суйлав округ комиççин ларăвĕ пулса иртрĕ.

Комиççи вырăнсенче суйлава хатĕрленес ĕç мĕнле пынине пăхса тухрĕ.

Райĕçтăвком председателĕсем пĕлтернĕ тăрăх тата вырăнсенче ĕç мĕнле пынине тĕрĕсленĕ тăрăх Вăрмар, Тăвай, Канаш районĕсенче суйлав Положенийĕсене вĕренес ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен. Сăмахран, Тăвай районĕнчи суйлавçсенчен 67 процентне кăна суйлав Положенийĕсене вĕрентес ĕçе хутшăнтарнă.

Районра 2 суйлав участки вальçи суйлав урнисемпе суйлав кабинисем хатĕрлемен. Çавăн пекех суйлавçăсен списокĕсене те туса пĕтермен. Суйлавçăсен спискине тунă çĕрте пысăк йăнăшсем тăваççĕ. Çапла, Тăвай районĕнче Тăрмăш йалĕнче 18 çула çитмен çынсенех суйлавçăсен спискине кĕртнĕ.

В. Чернов.

Ĕлĕкхи „суйлавсем" çинчен

(Чăваш архивĕн материалĕсем тăрăх)

Октябрьти Аслă революциччен чăваш ĕçхалăхĕ вĕçи-хĕррисĕр йăвăр пусмăрлăхра асап тӳссе пурăннă. Помещиксемпе пупсем халăха тарçă туса усранисĕр пуçне, чăвашсене ĕлĕк авал тимĕртен кĕмĕлтен тунă йапаласене тата вăрçа йурăхлă тимĕре сутма хушман (З. Р. И. т. Ш. ст. 1579). Ĕлĕк авал чăвашсем çĕçĕ, пуртă, кĕреçе, çăпата, пиравăр т. ыт. сутса илме пултарайман. Ремесла пĕлекенсене пĕтерсе пынă, вĕсене ушкăнĕ-ушкăнĕпе пысăк хуласене катăртăна ĕçлеме хăваласа йанă. Патша влаçĕ чухне нимĕнле правасăр „вак халăхсене" хăйсен йалĕнчен тухса 30 çухрăмран ытла айакка кайма йураман. 1737 çулти майăн 10-мĕшĕнче Çенат кăларнă саккун тăрăх, тутарсенчен, чăвашсенчен тата ытти „вак халăхсенчен" икĕ хут ытларах хыснана тырпул тӳлеттерсе пынă. Лайăх çĕрсемпе улăхсене, чăвашсенчен тытса илсе, хăйсене карăнсем тума, карап тумали вăрман касма хăваласа йанă. (З. Р. И. т. 6, ст. 4665). Хутса ăшăтма йе каскалама кирлĕ вут-шанкă пулман, мĕншĕн тесен Ока шывĕнчен пуçласа Атăл тавралăхсенчи вăрмансенчен пĕр йăвăç та кастарман. Çенатăн 1720—1722-мĕш çулсенчи саккунĕсем тăрăх (З. Р. И. т. 6, ст. 4028), помещикрен ыйтмасăр йăваç каççан пĕрремĕшĕнче йăвăç пуçне 30 тенкĕ штраф хунă, иккĕмĕшĕнче — çуртйĕре тытса илнĕ, виççĕмĕшĕнче — пĕтĕм пурлăха тытса илсе, пушăпа хĕнесе йе сăмсана касса 20 çула катăргăна йамала тунă.

Патша чухнехи çар повиннăç уставĕ тăрăх (17, 18, 20-мĕш статйасем), çуран çарта, вунсакăр çул пурăнмала пулнă, вĕсенчен пилĕк çулне действительнăй службăра, вунвиçĕ çул запасра. Флотра 7 çул, запасра виçĕ çул. Çак срuксем [illegible] вăхăтра кăна пулнă, вăрçă вăхăтĕнче салтаксен вăрçă пĕтиччен йулмала пулнă, анчах 18 çултан кайа мар. Патша правительстви пулăшнипе, помещиксем „вак халăхсене" улталаса, хĕнесе, сийен-суран туса барщинă çинче ĕçлеттернĕ, тӳсейми куланайсемпе асаплантарнă.

Çакăн пек пусмăрлăхра пурăнса „вак халăхсем" государствă тытăмне хутшăнассишĕн темиçе ĕмĕр хушши кĕрешсе пурăннă, анчах пурнăçа кĕртме вĕсен май килмен. Российăра 1864 çулчен учрежденисенче пĕринче те суйланă çынсем ĕçлемен. Сасăлăма помещиксемпе дворйансен йăхĕсем çеç пултарнă. Реформă хыççăн, земствăсене суйлама хăшпĕр пуйан сословисене суйлав прави панă, анчах ĕçхалăхсене суйлав прави паман, мĕншĕн тесен рабочисемпе чухăн хресченсем суйлав прави илмелĕх çĕрпе вăрман, йе ытти пурлăх тытайман. Суйлав прави илес пулсан, темиçе çĕр теçетин çĕрпе вăрман, çĕршер пин пăт тырă пулмала пулнă, пурлăх цензĕ кирлĕ пулнă.

1905-мĕш çулта пролетариатпа хресченсем хĕснипе, патша правительстви государствă думи тунă, вăл „халăх суйланă" орган шутланнă. Анчах саккун кăларакан влаç ĕлĕкхи пекех патша самодержавийĕнче пулнă. Ĕçхалăх масси сасă прависĕрех йулнă. Государствă думин суйлав положенийĕ тăрăх, çирĕм пилĕк çула çитменнисем, çарпа флотра тăраканисем, хĕрарăмсем, шкулсенче вĕренекенсем, „çапкаланса çӳрекен инородецсем", йутçĕршыв çыннисем, 175 теçетинрай кайа çĕр тытакансем, 1500 тенкĕлĕхрен кайа мар пурлăх йе сутуилӳ промышленнăçĕ тытайманнисем, йе тата кил вырăнĕсĕр пурăнакансем суйлава хутшăнма, суйлав прави илме пултарайман. Çавăнпа та уйессенчи, йе кĕпĕрнесенчи пухува рабочисемпе хресченсен делегачĕсем лекме пултарайман. Лексен те, государствă думи çинчен кăларнă саккун тăрăх, пухури суйлавра пĕр çĕрулшучĕ сасĕ 15 хресчен йе 45 рабочи сасĕсемпе пĕртан шутланнă. Çапла ĕнтĕ, уйесран кĕпĕрнери суйлав пухăвне йе тата кĕпĕрнери суйлав пухăвĕнчен Государствă думине помещиксем, чиркӳ çыннисем, дворйансемпе патша чиновникĕсем çеç кĕнĕ. „Вак халăхсем" пушшех суйланма пултарайман, мĕншĕн тесен, Государствă думине суйламали положенин 55-мĕш статйинче—вырăс чĕлхине пĕлмен çынсем Государствă думи членне суйланма пултараймаççĕ, тенĕ.

Пуринчен ытла „суйлавра" пупсен шучĕ пысăк пулнă. 1912 çулта пулнă сийесра Çĕрпӳ уйесĕнче „суйлавçăсен" шутĕнчен пупсем 80, Йетĕрне уйесĕнче— 75 процент пулнă, ытттисем помещиксем пулнă. Йетĕрне уйесĕнче 1907 тата 1912 çулта уйесри, суйлавçăсен сийесĕнче сасăлама списак çине 57 çын кĕртнĕ. Вĕсенчен 9 çынни дворенсемпе статски советниксем, губернски çекретарсемпе купцасем: Петровски Мемнонпа Нестĕрĕ, Росоловски, Таланцĕв йăхĕсем пулнă. Ытти 48 çынни пĕтĕмпех уйесри пупсем пулнă (Йетĕрне у., Земски Управа 1097-мĕш ĕç).

Государствă думине мар, уйесри управă членсене суйлакан сийеса кайас пулсан та, 1890 çулта çирĕплетнĕ Земски учрежденисен положенийĕ тăрăх, нумай пуйанлăх, çĕр тата чин кирлĕ пулнă. Çĕрпӳ уйесĕнчи 1-мĕш суйлав пухăвне гласнăйсене суйлама çаксем кайма пултарнă:

Действительнăй статский советник (дворен) А. М. Арцыбашев, 958 теçетин çурă çĕр тытаканскер. Подполковник Белуковичсем штабс-капитансем, Йесипăв таврашсем, чиновник Ветошкинсем вĕсем кашнийĕх 773,9 теçетинран пуçласа 825,9 теçетин таран çĕрпе вăрман тытнă (Ист. арх., Çĕрпӳ у. управăн 1454-мĕш ĕçĕ). Чăвашсен Истори Архивĕнче усранакан управăсен ĕçĕсем çинче çакăн пек фактсем темĕн чухлĕ. Пуртте вĕсем ĕлĕкхи суйлавсен суйалăхне кăтартаççĕ.

Патша правительстви революци йухăмĕпе кĕрешме шанчăклă влаç органĕ пултăр тесе, ĕççыннисене революци кĕрешӳвĕнчен пăрса йарас меслсемпе, Государствă думи „суйлавне" пăтрапатарса иртернĕ. Çавăнпа та ĕлĕкхи „суйлава" социалисăмла çĕршыври суйлавпа танлаштарма йурамаст. Пирĕн çĕршыври суйлава пĕтĕм ĕçхалăхĕ пысăккăн хаклат, мĕншĕн тесен, Сталинла Конституци тăрăх ĕççынни депутачĕсен совечĕсене пурне те суйлавçăсем пурне те тивĕç, пĕртан тата тӳрех суйламали правапа вăрттăн сасăласа суйлаççĕ.

Кусемсĕр пуçне ĕлĕкхи чăвашсем пупсемпе хирĕçни питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă. Чăвашсем христос тĕнне йышăнмасăр нумайччен хирĕçсе пупсемпе çапăçса пурăннă. Христос тĕнне кĕрессĕн куланайпа хырçăсенчен хăтарса, Çенат чăвашсене виçĕ çуллăха çăмăллăх паратпăр, тенĕ. Тĕне кĕмесĕр туртăнса тăракансене пупсем чĕн пушăпа хĕнеттернĕ. Чăвашсене кун пек указсем те тĕне кĕме хушайман. Çавăнпа та патша правительстви хăйĕн тĕрекне сыхласа тăма чăвашсем хушшинче чиркӳсемпе мăнастырсем лартса тултарнă. Çапла ĕнтĕ халăхи Чăваш республикĕнче ĕлĕк 8 мăнастыр пулнă, чиркӳсем Шупашкар уйесĕнче—47, Çĕрпӳ уйесĕнче—45, Йетĕрне уйесĕнче—45, Улатăр уйесĕнче—28, Патăрйел уйесĕнче 19 чиркӳ тата 10 мечет пулнă. Çак чиркӳсене тутарма уйессенчи земски управăсем йалсем тăрăх çын пуçĕнчен кашни çул 60-шар пус кĕмĕл укçа пуçтарса пынă. Чиркӳсенчи турă сăнĕсене йусама, чиркӳвĕ ăшатса усрама та укçа пуçтарнă. Акă пĕр тĕслĕх: Именкассинчи чиркӳн 1911-мĕш çулхи летописне илсе пăхар, унта: „Иртнĕ çулсенчи пример тăрăх кăçалхи 1911-мĕш çул чиркӳве хутса ăшăтма, причтсемпе старăстăсене чиркӳ ĕçĕсемпе çӳреме, иконостассене йусама татах кашни çунран 27-шер пус кĕмĕл укçа пуçтармала" тенĕ.

Вăл чиркӳсенче штатпа кашнинче икшер пуп, икшер дйакăн, псаломщик, чиркӳ старăсти, чан çапакан, просвер сутакансем тата ытти те пулнă. Мăнастырсенче пуп таврашсем тата нумайрах шутланса тăнă. Вĕсем пурте ĕçхалăх ĕнси çинче тăранса, аншăнса, халăхăн кульдурлăхне пусарса пурăннă. Ĕлĕк пупсем мечет тунăшăн икĕ пăт тулă, виçĕ тенкĕ кĕмĕл укçа илнисене, вилекенсемпе çуралакансенчен пĕрер пăт ырăш илнисене те манмала мар. Улатăрти хĕрарăм мăнастырĕн 1753 çулхи доходне пăхсан, крушкăпа пуçтарса çулталăка 3623 тенкĕ те 54 пус пухăнни палăрат, банкăра 46.798 тенкĕ те 94 пус укçа выртни курăнат, вăл укçаран çулталăка 596 тенкĕлĕх процент ӳссе тăнă. Кунсăр пуçне мăнастыр чавсавайран, улăхпа çĕртен тата ытти çĕртен усламсем илнĕ.

Шупашкар уйесĕнчи Ишекри Микул чиркӳвĕ самодержави политикин пусмăр орудийĕ пулса тăнă. Çак чиркӳ тĕрлĕрен чирсем саракан йăва, ĕçхалăхне пусмăрласа çаратмали майсенчен пĕри пулса тăнă. Тĕн çĕрĕмĕнĕ хупласа Ишек чиркӳвĕ халăх укçине крушкăпа пуçтарса, тата çурта сутса 1902 çулта 16.394 тенкĕ, 1903 çулта 17273 тенкĕ, 1904 çулта 18.061 тенкĕ, 1905 çулта 17.412 тенкĕ, 1906 çулта 18.431 тенкĕ укçа пухнă. Чиркӳн урăх доходсем те нумай пулнă.

Кирлĕ вăхăтра пупсем земски начальникне, исправниксене, урядниксене улăштарма пултарнă. Аслисене (пупсене, исправниксене, патшана), пăхăнма вĕрентсе пурăннă вăхăтрах, пупсем хăйсем час-часах вăрласа, çаратса тата çынсене вĕлерсе иртĕнсе пурăннă. Ак хăшпĕр тĕслĕхсем. 1828 çулта Шупашкар уйесĕнчи Кĕçĕн Тимерч чиркӳ пупĕ дийакăнпа пĕрле тĕне кĕртнĕ Кирилл Алексейĕв патне хĕрĕспе пырсан, Алексейĕв чиркӳ десатникĕ пулнă пулин те пуп вальçи хресченсенчен улăмпа арпа пуçтарма килĕшменшĕн, ăна пушпа дийакăн чиркӳ старăсти умĕнчех хĕненĕ. Хĕненĕ хыççăн, пуçĕ шыçăнса кайса Алексейĕв виçĕ ернерен вилнĕ (Ист. архивĕ, Шуп. у. суд, 266-мĕш ĕç).

1849 çулта Улатăр уйесĕнчи Дубенок чиркӳ пупĕ Золотницски патĕнче тарçăра пĕр çамрăк хĕр Çтепанидă пурăннă. Пуп хутла вĕрентеп тесе, час-часах Çтепанидăран йăпатса хĕр айапсăрлăхĕ çинчен ыйткаланă. Пĕрехинче, ӳсĕр килсе вăл Çтепанидăна пусмăрлама тытăннă. Çтепанидă çĕçĕ илсе: хĕр чыслăхне санпа пĕтеричччен луччĕ чикĕнетĕп тенĕ. Пуп Çтепанидăран çĕççине туртса илнĕ те: сан тире касса чĕн пиçихи тăвап, тесе хăратса намăс ĕç тунă. Çтепанидă жалăбă пама тăрсан, ăна пуп çĕпĕре йарап, тесе хăратнă. Йăвăр çын пулсан, Çтепанидăна „аскăнса" çӳренĕшĕн Чĕмпĕрти палатă мăнастырне асаплантарма хупнă. (Ист. арх., Улатăр у. суд, 2838-мĕш ĕç).

1820 çулта Шупашкарти собор пупĕн арăмĕ Стреминскайа Е. И. хăйĕн „килти" хĕрне Пелагейă Данилăвнăна догăвăрпа 100 тенкĕ укçала сутнă. Пелагейă Данилăвнăна порутчик хĕрĕ Йекатеринă Крахтинă илнĕ. Çак суту-илӳве Шупашкар уйесĕнчи судра крепостной ĕçсен кĕнеки çине çырса çирĕплетнĕ (Ист. арх., Шуп. у. суд., 202-мĕш ĕç, стр. 11).

Тĕрлĕрен тӳсме çук тискерлĕхсемпе хăратса тĕне кĕртнĕ чăвашсем йалĕ-йалĕпе пухăнса, исправниксенчен христос тĕнĕнчен кăларма ыйтнă. 1866 çулта Çĕрпӳ уйесĕнчи Именкасси çыннисем пĕр çынна уйăрса, Çĕрпӳри исправник патне прошенипе йанă, 500 çынна христоса ĕненекенсен шутĕнчен кăларма ыйтнă.

Хресченсем ушкăнĕ ушкăнĕпе пухăнса пупсем çине жалăбăсем панă, чиркӳрен йе пупсен пусмăрĕнчен тухассишĕн нумай çапăçнă. Анчах Октябрьти Аслă революци çеç пĕтĕм ĕçхалăхне ĕмĕрхи чуралăх пусмăрĕнчен хăтарчĕ, чиркӳсене государствăран, шкула чиркӳсенчен уйăрчĕ. „Вак халăхсене" хăйсен кульдурипе промышленнăçне пĕтĕм пурнăçне вăйлатма ирĕк пачĕ.

П. Йермолайĕв.

Пайан Казахстан халăх йурăçи орденоносĕц Джамбул сăвăсем çырма пуçлани 75 çул тултарат.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Казахстан халăх йурăçи Джамбул.
В. Микош фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

ЙУРĂÇĂ СĂМАХĔ

Джамбул

Пăхсам; май хĕвелĕ тухса йалкăшат—хирсем халь çурхи чечекре.
Еп хам та, карăппăл пек, ватăлнă çын, сатпа пĕр танах йешереп.
Йалтарат сывлăм шывĕ çулçă çинче. Кăвак тўпе тарăн, таса.
Çўлте май сĕрен-кĕперри йалтарат, куçа илĕртсе те савса.
Нумай ĕмĕр пынă хăрушă тĕлĕкрен вăранчĕç нумай халăхсем.
Май уйăхĕнчи çырма пек, сарăлса, йухаççĕ чăн ирĕк кунсем.
Чи асла тăванлăх пурнат халăхра—унран вăйли çук çĕр çинче.
Çĕршыв çитĕнет, çур выльат, телей йалавне вĕçтерсе ун çинче.

Джамбул—ĕмĕре йурăра çыракан, пурнап çĕр çула йахăнах.
Вăрах еп шырарăм чăнлĕх çĕр çинче. Чăнлăх, туйанатчĕ, çуках.
Анчах чăнлăх пулнă, вăл пур. Еп тупрăм хам çамрăклăха.
Хĕвел çутти—Сталин кăтартрĕ мана чи аслă, таса чăнлăха.
Ман ачасем, ман ачан ачисем, кам çамрăк манран—йалтах,
Итлĕр. Джамбул йурлама тытăнат, çинçе хĕлĕхпе йантратса.
Итлĕр мана тăрăшса, тимлесе, чĕрĕрсене уçса:
Ку—аслă сăмахăм, ку—тĕрĕслĕх ман. Йурлатăп тупа туса:
— Йулашки сывлăша çăтиччен чăнлăха та çынна ес йурат.
Чи çамрăк Сталинла ĕмĕре пур йунупа ес йурат.
Похода çўрекен харсăр паттăрсене ырăпа асăнса ес йурат
Вилĕмсĕр, ăслă, аслă халăха таса чунупа ес йурат.
Ĕмĕр курман туслăха—халăхсен туслăхне ес йурат.
Аслăран та ăслă çынна, пусмăр-сăнчăр аркатнă çынна,
Ырăран та ырă çынна—Сталина чĕререн ес йурат.

А. Алка куçарнă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммуниссем Обком отчотне сўтсе-йаваççĕ

ÇĔРПЎ (хамăр корр.). Çĕрпў районĕнчи коммуниссен пухăвĕ майăн 15-мĕшпе 16-шĕнче ПСК(б)П Обкомĕн отчотне (М. Ф. Терентйев йулташ докладне) сўтсе-йаврĕ. Обком отчотне сўтсе-йавни коммуниссен активлăхĕ пысăккине кăтартса пачĕ: пренире 26 çын тухса каларĕç.

Тухса каланă йулташсем пурте пĕр саспа ПСК(б)П Обкомĕ тата партин Чăваш организацийĕ, çулпуçĕ Сталин йулташ, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йертсе пынипе, халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла бандитсене, буржуалă национал-фашиссене çĕмĕрсе тăкас тĕлĕшпе пысăк та хаклă ĕçсем туса иртернине палăртрĕç. ПСК(б)П Обкомĕ кăçалхи çул районсенчи парторганизацисем умĕнче отчот тунине хĕрўлĕн ырларĕç.

Парти Обкомĕн кивĕ руководстви (Петров çекретар пулнă чухне) массăсенчен уйăрлса кайнă пулнăскер, парти массисĕнчен хăранăскер, нихçан та çак кăçалхи пек отчотсем туса курман. Обкомăн кивĕ руководствин ĕç стилĕ йатлаçса тăкасси, ĕçри йанăшсемпе çитменлĕхсене критиклеме хăйакансене хĕсĕрлесси пулнă.

— Парти Обкомĕн хальхи руководстви ĕçлĕхлĕн йертсе пырат. Ĕçпе чĕнсен йе канашлусене чĕнсен Обкома пит кайас килет, мĕншĕн тесен унта сана пулăшу парасса пĕлсех тăратăн,—çакна пухура нумай йулташсем уйрăмах палăртса каларĕç.

Кунпа пĕрлех, тухса каланă йулташсем парти Обкомĕн пайĕсен, халăх комиссариачĕсен, суту-илў организацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене çивĕччĕн критиклесе, çав çитменлĕхсене пĕтерме сĕнўсем пачĕç.

— Пирĕн районри активăн, парти историпе ленинисăма вĕреннĕ йулташсен, маркçисăм-ленинисăм классикĕсен уйрăм произведенийĕсене вĕренме тытăнмалаччĕ, анчах вĕсем, преподавателĕсем çук пирки, вĕренмеççĕ. Пире ку тĕлĕшпе Обкомăн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕнчен пулăшу кирлĕччĕ,—анчах вăл пулмарĕ. (Рыжов—райком инструкторĕ).

— ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕ тĕлне чăвашла кăларнă агитатăр блок-нотне суйлав хыççăн тин илтĕмĕр (Агейĕв—райком çекретарĕ).

Тухса каланă йултащсем парти вĕрентĕвĕнчи пахалăхшăн кĕрешмелине, пропагандиссен кадăрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе ытларах ĕçлемелине палăртрĕç.

— ПСК(б)П Обкомĕн шкулсен пайĕ вăтам шкулсенчи работниксене пĕлмест. Кăçалхи йанвар уйăхĕнче пире Шупашкара чĕнсе илчĕç те пирĕнпе 15 минут хушши çеç каласрĕç, иккĕмĕш хут чĕнсессĕн—3 минут хушши каласрĕç. Паллах, ун пек чĕнсе илниччен нимĕн усси те çук, вăхăта ахаль иртерни çеç. Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче халь ĕнтĕ çĕнĕ руководствă ĕçлет. Анчах Çутĕç Халăх Комиссариачĕн ĕçĕнче волокитăпа бўрократисăм халь те çаплах пур-ха. Вăл пире, преподавателсемпе учителсене, методика тĕлĕшпе нимĕнле пулăшу та памаст, чылай предметсемпе (чăваш чĕлхи, чăваш литератури, вырăс челхи) программăсемпе учебниксем çук, çавă вăл шкулсен ĕçĕнче калама çук пысăк чăрмав кўрет. (Александрăв—Педучилищă).

Тухса каланă йулташсем нумайĕшĕ Çутĕç Халăх Комиссариатне кирлĕ пек ĕçлеттерме ыйтрĕç.

— ПСК(б)П Обкомĕн йалхуçалăх пайĕ чĕнсе илтĕр пире пĕр-ик кунлăха. Йалхуçалăх пайĕнчи йулташсем ыйтса пĕлчĕр епĕр мĕнле ĕçлени çинчен тата мĕнле ĕçлемелине каласа паччĕр (Григорйĕв—выдвиженец, районри çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ).

ПСК(б)П Обкомĕн йалхуçалăх пайĕпе Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн конкретлăрах, чĕррĕнрех йертсе пымала, кадăрсене ĕçре вĕрентсе пымала, тесе каларĕç.

Йалхуçалăхĕнче сăтăрлăх сийенĕсене пĕтерес ĕç халĕ те кирлĕ пек пулса памаст-ха: йалхуçалăх уставне пăснисем, фермăсенче выльăх-чĕрлĕхсем вилнисем халĕ те пулаççĕ. Çавă вăл клас тăшманĕсемпе вĕсен агенчĕсен алли,—йалхуçалăхĕнче, пур ĕçре те, революцилĕ сыхăлăха çўлĕ тытмала, пире вăрттăн майпа сăтăр тăвакан тăшмансен йулашкисене, троцкисла-бухаринла, национал-фашисла бандитсене тĕпĕ-тымарĕпе тăпăлтарса пымала.

Пухура тухса каланă йулташсем суту-илў ĕçĕнчи çитменлĕхсене калама çук хытă критиклерĕç, сăтăрлăх сийенĕсене (растратăсене, кооперативсене руководствăсăр хăварнине т. ыт те) пĕтерсе, суту-илў ĕçне кĕске вăхăтрах лайăхлатса йама сĕнчĕç.

Иртнĕ вăхăтра рабочисене, колхозниксене, трактăриссене, комбайнĕрсене парти ретне илес ĕçе çителĕксĕр туса пынине палăртса, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăракан, ĕçре тĕрĕсленнĕ активиссене парти ретне илессине, сочувствуйушчисемпе, кандидатсемпе, комсомол организацисемпе, пионерсемпе ĕçлессине вăйлатма сĕнчĕç коммуниссем.

ПСК(б)П Обкомĕн ĕçĕсем çинчен Терентйĕв йулташ докладне итлесе сўтсе-йавнă тата вăл йулашкинчен каланă сăмаха итленĕ хыççăн районри парти пухăвĕ:

— Парти Обкомĕ политикăлă тĕрĕс çулйĕр тытса пынă, практикăла ĕçĕсем çителĕклĕ, тесе йышăнчĕ.

Ф. Александрăв.

Вăрнарти парторганизацин районри пухăвĕ

ВАРНАР. Майăн 19-мĕшĕ, (хамăр корр. телефон тăрăх), Виççĕмĕш кун ĕнтĕ районри парторганизаци пухăвĕ пырат. Пухăва пурĕ 131 коммунис пухăннă.

Пухура ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн отчочĕ тăрăх 23 коммунис тухса каларĕç.

Енерхи каçхи ларуран пуçласа пайан кун та райком отчочĕ тăрăх прени пырат.

Тухса калаçакансенчен нумайĕшĕ Обком тата райком ĕçĕсене чылай çитĕнсем пуррине кăтартса панипе пĕрлех, çитменлĕхсене те нумай тупса палăртаççĕ. Вĕсем конкретлă тĕслĕхсем илсе кăтартса уйрăмăнех большевикла сыхлăха вăйлатма кирли çинчен, совет тата парти органĕсене хĕсĕнсе йулнă клас тăшманĕсене тата вĕсене пулăшса пыракансене пурне те тупса палăртса, тăра шыв çине кăларса, сăтăрла ĕçсен йулашкисене хăвăрт пĕтерсе пыма кирли çинчен нумай чарăнса тăчĕç.

М. Костин.

Ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсене суйларĕç

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Йанварти пленум решенийĕсемпе Сталин йулташ кăтартăвĕсем парти организацисене, коммунисĕсене халăх тăшманĕсемпе вĕсен сăтăрлăхĕн сийенĕн йулашкисене социализм строительствин пур участкисенче те тăкла пĕтерсе пыма мобилизацилерĕç, коммунисен политикăла сиссĕмлĕхне ўстерчĕç.

Йанварти пленум решенийĕ пурнăçласа Шăмăршă парторганизаци пысăк утăмсем турĕ. Партие илес тĕлĕшпе малтан райком çителĕклĕ ĕçлемен пулсан, халь ку ĕç те авăнланчĕ. 1938 çулти йанвар уйăхĕнчен пуçласа май уйăхне çитиччен парти членне 9 çын, кандидатне 10 çын илнĕ.

Сакăн пекех парти, совет, хуçалăх, комсомол т. ыт. организацисене тăшмансенчен пасалса кайнă çынсене тасатса, вĕсен вырăнне йертсе пыракан органсене кĕрешўре тĕрĕсленнĕ, Ленин-Сталин партийĕ пăхса ўстернĕ работниксене лартса сĕнетес тĕлĕшпе те палăрмала ĕçсем турĕ.

Анчах, халăх тăшманĕсене, вĕсен сăтăрлăхĕн сийенне йулашкисене пĕтересе ĕç çителĕклĕ пырат темĕ çук-ха.

Партин йертсе пыракан органĕсене суйлас тĕлĕшпе ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленийĕпе инструкцине тата Чăваш Обкомĕн VI-мĕш пленум постановленийĕне илсенех, Шăмăршă ПСК(б)П райкомĕ парторганизацисене пуçтарса инструкципе тĕплĕн паллаштарчĕ.

Йышăннă план тăрăх, апрелĕн 16-мĕшĕпе 25-мĕш хушшинче пуçламĕш парторганизацисенче те отчотпа суйлав пухăвĕсем пулса иртнĕ. Апрелĕн 22-мĕшĕпе 30-мĕш хушшинче пуçламĕш организацисенче ПСК(б)П райком отчочĕ пулчĕ.

Вуна пуçламĕш парторганизацисенче парти членĕсемпе кандидатĕсем 86 çын. Вĕсенчен отчотпа суйлав пухăвĕсене 79-шĕ пулнă. Парторгсен отчочĕсем тăрăх 69 коммунис тухса каласнă (87,4 процент). Парторганизаци йертсе пыракан органĕсене суйласа иртересси çинчен ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановленийĕне тата инструкцине çирĕп пурнăçласа пырса, суйлавра парторгсене тăшмансемпе çапăçса пиçнĕ, Ленин Сталин парти ĕçĕшĕн тăрăшса ĕçлекен çынсене суйласа хăварчĕç.

9 парторгран 5-шĕ пĕрремĕш хут, парторгсен 9 заместителĕнчен 5-шĕ пĕрремĕш хут суйланчĕç.

Вăрмашпромхоз сумĕнчи парторганизаци парторгне выдвиженец Карпов П. К. йулташа суйланă.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраль марти пленум решенийĕсене пурнăçласа халăх тăшманĕсене пĕтерес тĕлĕшпе пирĕн парторганизацисем пысăк ĕçсем турĕ. Анчах çак вăхăтрах уйрăм парти членĕсем çинчен сўтсе-йавнă чухне, вĕсенĕ ним сăлтавсăр айăпласа пысăк йăнăшсем турĕç, коммунисене пĕр айăпсăрах партирен кăларнисем пулнă. Вăрмашпромхоз—Урнешва Аксенов, НКВД—Кусминна Лаптев, райпотребсоюз Кузнецов йулташсене, вĕсен ĕçĕсемпе лайăх паллашмасăр партирен кăларнă.

Партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕ иртерчĕ вăхăтра пуçламĕш парторганизацисем шучĕ те ўсрĕ, тĕслĕхрен: лесхоз сумĕнче тата „Красный партизан" колхоз сумĕнче çĕнĕрен пуçламĕш парторганизацисем организациленĕ.

Отчотлă пухусенче тухса калаçакансем райком ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене кăтартрĕç. ПСК(б)П райкомĕ, пуçламĕш парторганизацисене çителĕклĕ пулăшман, агитатăрсемпе çителĕклĕ ĕçлемен.

Партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕ партилĕ-политикăлă ĕçе çирĕплетрĕ, парторганизацисене массăпа сыхăнса ĕçлессине лайăхлатса политикăпа хуçалăх задачисене вăхăтра пурнăçласа мобилизацилерĕ.

„Трактăр" колхоз председателĕ сочувствующи Патăн Ф. йулташ парторганизаци йертсе пыракан органĕсене суйлана май çуракина лайăх кăтартусемпе, агротехникăлла ĕçсене лайăх пурнăçланипе вĕçлерĕ. „Красный партизан" колхоз сумĕнчи пуçламĕш парторганизацире партин массăла ĕçĕ лайăхланчĕ. Çавна пула унта парти членĕн кандидатне 2 çын, парти членне 1 çын илнĕ.

Парти организацисем умĕнче тăракан задачăсем пысăк та ответлă. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене пысăк пахалăхпа иртересси парторганизацисен умне пысăк задачăсем кăларса тăратат. Пирĕн районри парторганизаци çав задачăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешет.

ПСК(б)П Шăмăршă райком çекретарĕ **Г. Андрейĕв**.

ДЖАМБУЛ

Джамбул пурнăçĕ легендă майлă.

Унăн ачалăхĕ Рoççийăра крепăсла йĕрке вăйлăн çирĕпленсе тăнă вăхăтра иртнĕ, Рoççийăн колонийĕ пулнă Казахстанра ун чухне чурасемпе суту тунă... Пулас чаплă йурăçă 1846 çулта, вырăнтан вырăна куçса çўрекен кĕлмĕç çемйере çуралнă, ăна сывăхри Джамбул йатлă сăрт йатне илсе, Джамбул тесе йат панă.

Вĕçĕхĕррисĕр çеçенхирте, чарăнса пурăнма ниçта ăшă йăва тупаймасăр, ĕмĕрхи йĕркесемпе пурăнакан нумай йышлă казах халăхĕ вырăнтан вырăна куçса çўренĕ. Вăл халăх икĕ йĕнчен асап тўснĕ: пĕрчĕ вăл—вырăс патшин пусмăрĕ, тепри—казах пуйанĕсен пусмăрĕ пулнă. Пиншер, вуншар пин пуç выльăх тытса тăракансем, несĕл пуçлăхĕсемпе старейшинăсем, çеçенхирсен байĕсем халăх çинче хуçа пулса тăнă, пур казахсемшĕн те вĕсем саккун каларнă. Çеçенхиршĕн çырса кăларнă уйрăм саккун пулман, вăл тахçанхи кивĕ йăласене тата пуйансен пĕчĕк ушкăнĕсене паранса пурăннă. Мусульман духовенстви аллинче хут цĕймен халăха ăнланмалла мар, анчах та тамăкри тĕрлĕ хăрушлăхсемпе хăратакан кĕнеке пулнă.

Казахсен байĕсем, вырăс промышленникĕ-колонизатăрĕсем, жандармсем тата приставсем, халăха пусмăрлама, халăх пурлăхне çаратма, улталама кирлĕ чухне,—хăт кирек-хăçан та, пĕр чĕлхе тупнă.

Çак халăх, пурнăç мĕнле кăна йăвăр пулсан та, йурăпа йумаха йăланах хăйпе пĕрле илсе çўренĕ, вăл халăхăн йумахçи-йурăçисем ĕмĕртен-ĕмĕре йурласа пурăннă çĕпĕç саслă тумрисене кирек ăçта кайсан та хăйсенчен хăварман.

Лайăх йурăçă-поет, музыкă çеммипе хăйĕн сăввисене йурласа пама пултаракăнскер, çеçенхирте чи чаплă çын шутланнă. Ăна кашни йуртăсенче хаклă хăна пек хисеплесе, чысланă, вăл—халăхăн чи йуратнă çынни пулса тăнă. Çакăн пек поетсем—„акынсем" сахал мар пулнă. Ахальтен мар казахсен нумай легендисенче чухăнсемшĕн лайăх пурнăç шыраса пĕтĕм тĕнче йĕри-тавра çўресе çавраннă йурăçă Асан-Кайгы—çеçенхир дон-Кихочĕ—час-часах тĕл пулат.

Хăшпĕр акынсем байсене ырласа йурланă. Вĕсем, кĕреке умĕнчи пĕр чĕптĕм апатшăн тата хуçа çинчи халата туйанассишĕн, байсен ĕçкисенче йурласа çўренĕ. Байсем йуратакан акынсене халăх йуратман. Ун вырăнне, чухăнсен тарăхăвĕсемпе шанчăкĕсем çинчен йурлакан акын халăх умĕнче калама çук пысăк хисепре тăнă. Джамбул хăйĕн ĕлĕкхи йуррисем пирки акă мĕн калат:

„О жизни крутой, как оленья
гора,
Пела надтреснутая домбра".

Çамрăклах тумра тытнă вăл, вара ăна урăхран алăран йаман. Джамбул чаплă акынăн Çуйумбайăн ученикĕ пулнă. Çуйумбай ăна çапла каласа вĕрентнĕ: „Пысăк акынăн хăйĕн сасси пулмалла. Çĕре харпăр-хăй аршăнĕпе виçни кирлĕ. Санăн кашни сăмаху тăшмана кинжал пекех амантма пултартăр. Нихçан та ан икĕпитлен. Сăмаххусене хăвăн чĕрўнтен, çăлран шыв ăсна пек, ăсса тăр".

Çамрăк Джамбула ватă акынăн сăмахĕсем тарăн шухăша йанă. Халĕ 75 çул иртнĕ хыççăн та Джамбул ăна манмаст, ĕнерхи кун пек астăват. „...Епĕ хамăн чăн сăмахсене тупрăм, тет вăл.—Хам чухăн пулнăскер, чухăн халăха епĕ çамрăклах лайăх ăнланнă. Тĕрĕс йурлама еп хам çинчен тата халăх çинчен кăна пултарнă. Халăх çинчен йурланă чух епĕ хам çинчен, хам çинчен йурланă чух халăх çинчен йурланă. Акынăн улталама, икĕпитленме йураманнипе мĕнпур чĕремпе ăнланса, епĕ хамăн чăн сасăпа тĕрĕслĕх çинчен йурлама пуçларăм".

Çакăнта ĕнтĕ Джамбулăн вăйĕ.

Джамбулăн пурнăçĕ—казах халăхĕн пурнăçĕ.

Çамрăк акын казахсен йăвăр пурнăçĕ çинчен, чухăнлăх, тĕрĕсмарлăх, лайăх пурнăçа шырасси çинчен йурăсем йурласа, вĕçĕхĕррисĕр çеçенхир тăрăх тата чуллă сăртсен сукмакĕсемпе вырăнтан вырăна куçса çўренĕ.

„Я встретил в седле своей жизни
рассвет.
Была моя кляча худа, как
скелет.
Шаталась она—и степной
ветерок
Сумел бы свалить ее с ног".

Йулташ вилĕмĕ, ача çурални, бай чухăна кăмăлсăрлантарни, сурăхсен кĕтĕвне пĕтернĕ çил-тăман, шыв тулса кайни, кĕтўç хăйĕн савнине туртса илнишĕн пуйана тавăрни,—тата çакăн пек пулса иртекен нумай тĕслĕхсене çутатса панине курма пулат Джамбул хуна йурăсенче. Хăш чухне вăл байсен йуртиссне вĕсене тăрă шыв çине кăларакан йурăсемпе кĕнĕ, байесем унтан хăранă, мĕншĕн тесен Джамбулăн çивчĕ сăмахĕ çеçен-хирти çил пекех хăвăрт вĕçсе çавраннă.

Джамбул йăланах халăхпа пĕрле пулнă. Казахсем—чăтма çук йăвăр тата тĕттĕм пурнăçпа пурăннă. „Казахсем чахуткă чирĕнчен, таса мар пурăннинчен вилсе пыраççĕ",—тесе пĕр вăтанмасăр каланă буржуалă историксем. Анчах чахуткă чирĕ те, таса мар пурнасси те патша пусмăрĕнчен килмен-ши? Ку „историксем" ун çинчен шарламаççĕ.

55 çула çитсенех, Джамбул хăй ватăлнине, пурнăç çулĕ вилĕм алăкĕ умĕнче тăнине туйнă. Унăн сасси вăйсăрланнă, сывлама йăвăр пула пуçланă. Вăл туйа çине тайанса çўренĕ. Унăн ĕшеннĕ аллисемшĕн чуна çĕклентерекен тумра та ытлашши йăвăр пула пуçланă.

„Епĕ йурăсем йурлама чут çеç пăрахаттăм" тесе асаилет Джамбул, 37 çул кайарахри вăхăт çинчен...

Хăçан-ха вăл çĕнĕрен йурлама пуçланă?

„... Казахсем шурă патшана хирĕç восстани кăларсан кăна темиçе йурă йурласа илтĕм епĕ, вăл йурăсем çеçенхир тăрăх йантăраса саланчĕç",—ответлет Джамбул.

Кун пек пулма пĕтĕм чунĕпе чĕрипе халăхпа çыхăннă поет çеç, хăйĕн пурнăçне халăх пурнăçĕпе çыхăнтарнă поет çеç пултарнă.

Джамбул час-часах асăнакан Казах чухăнĕсен аслă восстанийĕ империалисăм вăрçи вăхăтĕнче пулса иртнĕ. Вăл восстанийе патша çарĕсем нихăçан етемлĕх илтмен хăйарлăхпа пусарса лартнă.

Джамбулшăн иккĕмĕш çамрăклăх, иккĕмĕш çуркунне çавранса килнĕ вăхăтра вăл 71 çул тултарнă. Çак аслă çуркуннен йачĕ—Совет власĕ.

„Когда я как снег Ала-ту, стал
сед.
Узнал я счастливое слово
„Совет"—
Пришла в моей жизни вторая
весна.
Прекрасна, свежа и ясна".

Байсене хирĕç, патшана хирĕç пулса иртнĕ ăнаçусăр восстанисенче хăйĕн хăватне пĕтерсе пынă пек курнакан халăх, вилсе пыракан халăх хăй хушшинче сўлмаклă вăй тупнине курнă Джамбул. Вăл халăх шургвардейĕцсен бандине, вырăссемпе казахсен кулакĕсене, духовенствăна, националиссене хирĕç хăйарран кĕрешнĕ, вăл халăх социалисăмла революцине хастарăн сыхланă.

Казах халăхне çак вăйа революцин хĕмĕпе вĕресе тăракан Рoççийă, вырăс пролетариачĕ, аслă Ленин—Сталин партийĕ пачĕ. Казахстана ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен Хĕрлĕ Çара Фрунзе йертсе пынă. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ хыççăн Казахсен революцилĕ хăйулă отрйачĕсем кайнă.

Темиçе ĕмĕр хушши асапра пурăннă халăхăн паттăрлăхĕ тăшмана çĕнтернĕ, уншăн çĕнĕ пурнăç пуçланнă. Темиçе ĕмĕр хушши чуралăхра, тискерлĕхре, тĕмлĕхре пурăнаслăх нихăçан çавранса килмелле мар пулнă.

Çирĕм çул иртнĕ ĕнтĕ Казахсен аслă поечĕ Джамбул çĕнĕрен çуралнă пек çамрăкланнăранпа Мĕн пур пулса иртекен ĕçсем çине сас паракан чĕлхи ун пĕтĕм Совет Сойузĕ тăрăх йанравлăн кĕрлет. Тăван çĕршыва, ирĕке тухнă халăхăн аслă çулпуçĕсене—Ленина, Сталина хăй вĕçĕ-хĕррисĕр йуратни çинчен каланă чух Джамбулăн сасси çурхи йухан-шыв тапса аннă йевĕр кĕрлесе йантăрат.

„Мой Ленин! Тебе эта песня сейчас.
Мой Ленин, живешь, ты в каж-
дом из нас,
Как солнце, согрев миллионы,
Миллионы тех, кто с нуждой
дружил,
Миллионы тех, кто без родины
жил.
Миллионы людей угнетенных!
Я завещанье оставлю им—
Правнукам, внукам и детям своим,
Чтобы такими, как ты, они стали
И отдали сердце и каждый свой
шаг
Тому, в ком пылает твоя душа,
Тому, чье имя—Сталин!"

Джамбул хăйĕн вуншар, çĕршер сăввисенче Сталинăн пур етемлĕхшĕн хаклă йатне ырлат:

„Сталин! Солнце весеннее—это
ты!
Ты посмотришь, и словно от теп-
лых лучей,
Колосятся поля, расцветают
цветы,
Серце бьется сильнее и кровь
горячей..."

Казахсем патне телей ăçтан килнине, вăл телейе кам илсе килнине Джамбул питех те аван пĕлет. Казахсене тăван пек пулăшу панă аслă вырăс халăхĕ çинчен, большевиксен аслă партийĕ çинчен, халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин çинчен ырми-канми йурлат поет.

„Кричу я ветрам, что бушуют
в листве,
Шепчу я ручью, что бормочет
траве,
Прошу лебедей, что плывут в
синеве—
Снесите привет мой Москве!"

Джамбул, çĕршывра мĕнпур пулса иртекен ĕçсем çинчен хĕрўллĕн сас парат. Вăл—колхозсемшĕн агитацилет, вăл—Верховнăй Совета суйлас çĕрте пропагандис пулса тăрат, вăл—герой-льотчиксен тата польарниксен йуратнă йурăçи вăл—Хĕрлĕ Çарăн паттăр йурăçи вăл—ĕлĕкхи йăвăр пурнăç çинчен тĕрĕссĕн каласа паракан йурăçă, вăл—коммунисăмăн пуласлăхне куракан аслă йурăçă.

Пушхирте тўлпан чечеке ларати, хирти çереме сухалама трактăр килети, кĕтўри паттăр лашасем кĕçенсе илеççĕ-и,—пурне те Джамбул йурра хурат, пурин çинчен те йурă шăрантарат вăл.

Халăх тăшманĕсене, предателсене, тăван çĕршыва сутакансене, шпионсене ылханнă чухне Джамбулăн йуррисенче тимĕр аслатиле сасăпа, пророкла ылхану йанăрат.

Çакăн чухлĕ чакми вăй-хăват халăх вăйĕпе ирĕклĕхĕ хавхалантаракан çыннăн çеç пулма пултарат. Ватăран ватă Джамбул тăвакан ĕçе туса тăма ирĕклĕх çиттĕр тесен, çынра темиçе пин ирĕклĕх пĕрлештерес пулат.

Ер-Назар колхозĕнче, шурă йуртăра пурăнат вăл, вăл—пĕтĕм халăх йуратса тăракан аслă акын. Унăн кăкри çинче Хĕрлĕ Ĕç йалав орденĕ çиççе йалкăшат.

Пирĕн вăхăт çын вăй-хăватне темиçе хут ўстерет, çыннăн ăс-хакăлне вĕçĕ-хĕррисĕр сарат. Джамбул ĕнтĕ старик-казах, талантлă импровизатăр кăна мар, Джамбул вăл—çĕршыв тăрăх çеçенхирĕн ăшă та тутлă шăршăлă çилĕ пек вĕçекен çĕршер сăвăсем; Джамбул вăл—казах халăхĕн ĕмĕрхипе халь-хи чĕрийĕ.

Çавăнпа ĕнтĕ ватă поетăн 75 çул хушши туса тăнă пысăк ĕçне палăртакан йубилейне çамрăклăх уйавĕ пек кĕтсе илетпĕр епĕр.

„Халăх нихăçан та вилмест"—кĕскен те ăнланмалла каланă Сталин. Çак сăмахсенче—историне тарăнран тарăн ăнлантарса пани тата аслă оптимисăм курăнса тăрат.

Халăх творчествин çăл-куçĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр, кам та кам халăхпа чĕререн çыхăннă, вăл тĕлĕнмеле творчествăла паттăрлăхсем тума пултарат. Çамрăк ăру казахсен чаплă акынĕ Джамбулран чун тытăмĕн çирĕплĕхне тата пурнăçа йуратма вĕренсе пырат. Поетсем унтан çутă ăс-хакăлла, хĕрў чĕрелĕ пулма вĕренеççĕ.

А. Адалис

Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариатĕнче

Çак çулхи майăн 11-мĕшĕнче Йапонин Мускаври посолĕ г. Мамору Сигемицу Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариатне нота панă, çав нотăра, хăйĕн правительстви хушнă тăрăх, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕ П. А. Смирнов йулташ Владивостокра майăн 1-мĕшĕнчи парадра каланă самахĕнче Йапони тĕлĕшпе елеклесе каланисем пур, тесе протестлесе çырнă.

Майăн 14-мĕшĕнче Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ Б. С. Стомоньакăв йулташ ответлесе йанă нотăра г. Сигемицуна çакăн çинчен асăрхаттарнă: йулашки пур çулсем хушшинче те Йапонире чăс-часах официаллă учрежденисемпе официаллă çынсем хутшăнса, Совет Сойузне хирĕç тĕрлĕ елексем сарас тата ăна хирĕç вăрçă хатĕрлес тĕлĕшпе пропагандă тумă тăтăшах кампани туса пырассĕ. Çакăн пек елеклесе çырнă статйасемпе пĕлтерÿсем Йапони прессинче массăлăн пичетленсе тухни çинчен калама та кирлĕ мар, пăлăх, вĕсем Йапонири кăçса кайсах вăрçа хатĕрленекен умсăр-сумсăр çынсем хутшăннипе пулассĕ, Йапонин çар министерстви тата Йапонири тĕрлĕ çар органĕсем нумай тĕрлĕ брошурăсемпе памфлетсем пичетлĕсе кăларнине шалăрăни те ситеlĕклĕ пулса тăрат. Хăйсен ответлă положенине пăхмасăр, Йапони çарĕн палла руководителĕсем чылайăшĕсем халăх умĕнче хăйсен айăпĕ çинчен уççăн калама та хăйнă, çитменнипе тата Совет Сойузне хирĕç вăрçă хатĕрлес тĕлĕшпе пропагандă тума та хăйнă, ун пек тĕслĕхе нумайăх пулмаст генерал Араки каласни те, вăл Йапони правительствин членĕ пулса тăрат, кăтартса парат. Совет Сойузне хирĕç вăрçă хатĕрлес тĕлĕшпе. тăвакан çавăн пек пропагандă Совет Сойузĕнчи халăхсене тивĕçлипе тарăхтарат тата çав тĕлĕшпе Йапони пирки совет пичĕчĕ те тата уйрăм çынсем те шарламасăр тăма пултараймассĕ. Çакна хыттăнах палăртма кирлĕ: Йапонире мĕн пулса пыни пекки тата унта хальхи вăхăтра мĕн пулса пыни пекки Совет Сойузĕнче нихăçан та пулман, Йапонине хирĕç вăрçăпа тухма чĕнсе калани государствă дейателĕсем йенчен кăна мар, хаçатсемпе уйрăм çынсем йенчен те тата центртă кăна мар, Совет Сойузĕн чи инçетри вырăнĕсенче те пулман.

Совет правительстви г. Сигемицу нотинчен хыттăн тĕлĕннине палăртса, Стомоньакăв йулташ йулашкинчен çапла каланă: Совет правительстви çулте каланисене шута илсе, Йапони правительствин çавăн пек ыйтусем тĕлĕшпе йанă протесне, Совет Сойузне хирĕç вăрçă хатĕрлес тĕлĕшпе тăвакан пропагандă пирки тата çав пропагандăна туса пына çĕрте Йапонири государствă учрежденисемпе официаллă представителĕсем хутшăнса ĕçленĕ пирки Йапони правительстви хăйĕн политикине улăштармасăр, пăхса тухма кирлĕ мар тесе шутлат,—тенĕ.

(ТАСС).

Йапонĕцсем вĕлерекен газсем йарассĕ

Çар Совечĕн политнайĕн начальникĕ Чжейень Чен генерал йапонĕцсем фронтăн тĕрлĕ участкисенче вĕлерекен газсем йани çинчен официаллăн пĕлтернĕ. Апрелĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа, Тайерчжуан районĕнче (Çурçĕр Китай) Йапони çарĕсем вĕлерекен газсем йана тата химилĕ снарйадсемпе пенĕ. Майăн 6-мĕшĕнче йапонĕцсем Тайерчжуантан çурçĕрпе хĕвелтухăçнеле Китай позицисем çине газлă атакă тунă. Май уйăхĕнче Йапони çарĕсем Йанцзын йуханшывĕн анат йенче тата Уху районĕнче вĕлерекен емелпе сапнă тăва па усă курнă.

Газсемпе тата çурăлса кайакан пулĕсемпе йапонĕцсем Суньцзайапу урамĕсенчи çапăçусенче те усă курнă.

Йапонĕцсем вĕлерекен газсемпе усă курни çинчен пĕлтерсе, Чжейень Чен çапла шанса каланă: пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшинчи обйазательствăсене пурнăçа кĕртсе пыракан правительствăсем вĕлерекен газсемпе усă курнине хирĕç Йапонине асăрхаттарĕç,—тенĕ.

(ТАСС).

Сутĕç Халăх Комиссариачĕн 5-мĕш специальнăй вăтам шкулĕнче (Мускав) 403 ача вĕренессĕ. Вĕсем 10 çул вĕренĕ хыççăн, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн артилери училищине вĕренме кĕрессĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран): малтанхи ретре: 10-мĕш класра вĕренекенсем: Самуил Левиант, тата Борис Шапошникăв, иккĕмĕш ретре—Борис Зимин, Филип Кисин, Георгий Нуин тата Алексей Журавльов йулташсем.

Е. Йевзорихин фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Алинари фермă—районра чи лайăххи

АЛИНАРИ (Ишлей р.) колхозра сысна ферми организациленнĕ 7 çул тултарчĕ. Çак хушăра фермăри сыснасен ăратлăхĕ лайăхланса, рĕсенчи ытларах тупăш илес, фермăри вырăхсем вальли витесуртсем лартса парас тĕлĕшпе пысăк ситĕнÿ тунă. Малтанхи çулсенче фермăра уи валли пăтăрласа витесем лартса парас тесе васкаман. Савщанкалах фермăра ĕçлекенсем тата фермă пуçлăхĕ тăтăшах улшăнса тăнă. Çакă та ĕштĕ фермă ĕçне вăйлатса йама чылай чăрмантарнă. 1936 çултан вара фермăри ĕçсем лайăхланчĕç. Çĕнĕрен чаплă витесем лартрĕç.

1937 çулта колхоз правленийĕ фермă пулса ĕçлеме Серебрйакова йулташа лартат. Серебрйакова ку ĕçе йуратса пуçăнат. Фермăра ĕçлеме лайăх колхозниксемпе колхозницăсене суйласа илет. Фермăра ĕç вăйпе тĕрĕс йĕрклесе йарат. Çурла çулта ăратлă, йут çывăран кÿрсе килнĕ 20 сысна ами туйанна. Çав сысна амисем иртнĕ çулта икшер хут çурласа пачĕç. Кашни сысна аминчен 12 çурă илнĕ.

Хальхи вăхăтра фермăра 180 пуç сысна шутланат. Аратсăр йăхсене йалтах пĕтернĕ. Государствăна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели кăçалхи планпе те пурнăçланă. Сысна çурисене лайăх пăхнипе вĕсем талăкне 600-шер грам хутшăнса пырассĕ.

Фермă çулран-çул колхоза пысăк тупăш парса пырат. „Алинă“ колхозра ăратлă сыснасем йораман хуçалăх çук.

Алинари сысна ферми „Красный путь“ колхозри фермăна ăмăртса ĕçлет. Ăмăрту договăрĕсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынипе 3 уйăхрах тĕрĕслесе тăрассĕ. Вĕсем пĕр-пĕрин ĕçĕсемпе паллашассĕ, лайăх опытсене пĕр-пĕрне патне куçарма тăрăшассĕ.

Фермă государствăна аш-какай парассипе вăхăтра туса пырат. Хальхи фермă кăçалхи çулшăн государствăна аш-какай 50 процент панă.

Колхозра Серебрйакова йулташа йуратассĕ, ăна хисеплессĕ. Мĕншĕн тесен, вăл тăрăшса ĕçленипе сысна фермине районра кăтартулă фермă тума пултарчĕ.

К. К.

Кувшинкăри канмали çурт

Чăваш Автономи 12 çул тултарни йачĕпе тăракан Кувшинкăри канмали çуртра кăçалхи майăн 4-мĕшĕнче улттăмĕш сезон пуçланчĕ.

Кувшинкăри канмали çуртра республикăри алăстăрсем ытларах канассĕ. Сталинла Конституци граждансене паракан канăç правине туллин усă курассĕ. Иртнĕ çулхи сезонра кунта 1.620 çын канна, кăçал 1.700 çынна йахăн канмала.

Канмали çурт пит те илемлĕ вырăнта ларат. Вăл Шупашкартан 8 километр аяатра, Атăлăн сулахай çыранĕнче хыр вăрманĕ ăшĕнче вырнаçнă. Сывлăш таса, тусан çук, йĕри-таврах хăйăр. Çанталăк лайăх чухне Атăлăн кĕрес те килмест. Вăхăт йалангах усă сывлăшра иртет.

8 сехетре—ирхи апат. Кăнтăрла иртни 1 сехетчен—кăнтăрлахи апатчен—вăхăт саванăçлăн иртет. Хăшĕсем затонра кимĕсемпе çÿрессĕ, теприсем улăхра Атăл хĕрринче выльассĕ. Çулахи вăхăтра шыва кĕрессĕ, хăйăр çинче хĕртĕнессĕ. Улăха ансан шап-шур Шупашкар курăнат, пăрахутсем иртсе кайассĕ.

Канмали çурт территоринче физкультурă площадки пур. Çамрăксем турникпе усă курассĕ, волейболла, баскетболла выльассĕ.

Каçхине клубра ташă пуçланат. Пĕр çменăра, 12 кун хушшинче, канмали çуртра виçĕ хут кино кăтартмала, пĕр концерт памала. Анчах кăçал малтанхи çменăра пĕр хут çеç кино кăтартрĕç, канакансем хăйсем тепĕр спектакль лартрĕç. Кунсăр пуçне Шупашкар пульницинчи аслă врач Кузнецов йулташ медицинă çинчен, каласу туса иртерчĕ.

Клубра читальнă, библиотека, тĕрлĕрен вăййасем, гармонь патефон пур.

Кашни 5 куçта пĕрре мунча кĕртессĕ.

Канмали çуртра чăннипех лайăх канма пулат. 12 кун хушшинче нумайăшĕсем 3—4 кило хутшăнассĕ. 7—9 кило таран хутшăнакансем те пур.

Кашни çменăра 125—150 çын канат. Канмали çуртра ларйок та пур, анчах малтанхи çменăра ларйок ĕçлемерĕ. Тепĕр çитменлĕх вăл—вырăнти трамвайсем (пĕчĕк пăрахутсем) Кувшинкăра чăранса тăманни. Шупашкар пристанĕн руководителĕсен айăпĕпе кăçал ку тарана çитсе те Кувшинкă тĕлне пристань туман.

С. Константинăв.

СПОРТ

Майăн 18-мĕшĕнче Шупашкарти стадионрă „Правда“ тата „Темп“ общĕствин иккĕмĕш командисем йулташла тĕлпулса выльарĕç. Вăйăра „Темп“ команди 6:1 шутпа çĕнтерчĕ.

Йетĕрнери тата Шупашкарти „Темп“ общĕствин ачасен командисем хушшинче пулнă вăйăра Шупашкарсем 3:1 шутпа çĕнтерчĕç.

Каçхине 6 сехетре Шупашкарти „Динамо“ тата „Темп“ командисем хушшинчи вăйă 2:1 шутпа „Темп“ çĕнтернипе пĕтрĕ.

Драмкружокăн ĕçĕсем

Кăçалхи вĕренÿ çулĕнче Канашри педагогикă училищи çумĕнче драмă, литературă, фото тата физкультура кружокĕсем ĕçлерĕç. Уйрăмăнах драмкружок лайăх ĕçлĕнĕ. Кăçал драмкружок членĕсем „Барышня крестьянка“, „Ночь перед рождеством“, „Не так живи, как хочется“ т. ыт. пйесăсене те лартнă. „Не так живи, как хочется“ пйесăна вăкунсем йусакан савăта кайса лартса панă. Спектакль курма 500 çынна йахăн пухăнчĕç.

Павел Леонский.

Чăваш Писателĕсен Сойузĕ Джамбул патне йанă телеграммă

Сире, Джамбул, Казахстана халăх йурăçне-импровизатăрне, пайан, есĕр йура хума пуçланăранпа 75 çул тултарнă кун, Чăваш писателĕсем хĕрÿлĕн саламлассĕ, татах та нумай-нумай йурăсем шăрантарма, татах та нумай çулсем хушши пурăнма ырлăх-сывлăх сунассĕ.

ЧСПС Шумилăв (Уйăп Мишши).

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Чăвашсен педагогикă рабфакĕ

1938—39 ВĔРЕНŸ ÇУЛĔНЧЕ

студентсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Вĕренме кăнтăрлахи уйрăмăн пĕрремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш курссене илеççĕ.

ВĔРЕНМЕ КĔМЕЛИ ЙĔРКЕСЕМ:

рабфака вĕренме пур граждансене те 18 çултан пуçласа 30 çула çитнисене; пĕрремĕш курса туллимар вăтам шкул программи тăрăх, иккĕмĕш курса 8-мĕш клас, виççĕмĕш курса 9-мĕш клас таран пĕлÿ илнисене илеççĕ.

ПĔРРЕМĔШ КУРСА КĔРЕС ТЕКЕНСЕНЧЕН

вырăс чĕлхи (сăмахпа, çырупа), математикă (сăмахпа, çырупа), чăваш чĕлхи (сăмахпа, çырупа) вырăс литератури, ССРС Конституцийĕ, естествознани тата географи (сăмахпа) предмечĕсем тăрăх туллимар вăтам шкул программи таран, иккĕмĕшпе виççĕмĕш курсне кĕрес текенсенчен асăннă предметсем çумне хушса физикă, хими тата ССРС историйĕ тăрăх ыйтассĕ.

ВĔРЕНМЕ КĔНИСЕМ ВАЛЬЛИ

рабфакăн общежити, выртса тăмалисем (тÿшек, çытар, утийал, койкă тата вĕреннипе кура стипенди парассĕ.

Зайавленипе пĕрле çакнашкал документсем кирлĕ:

1. Вĕренни çинчен свидетелствă.
2. Сывлăх пирки тата хул кастарнине кăтартакан справкă.
3. Хăш çулта çуралнине кăтартакан справкă.
4. Автобиографи.
5. Çар тивĕçлĕхне (военнообйазаннăйсен) кăтартакан справкă.
6. Виçĕ фотокартăчкă. Кашни çине хăй ал пусса государствă учрежденисенче çирĕплетни пулма кирлĕ.

Паспăрта пĕрле илсе пымала.

Зайавленисене ийунĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 15-мĕшĕччен йышăнассĕ. Испытанисем августăн 20—25-мĕш кунĕсенче пулассĕ. Испытанине рабфак чĕннипе çеç пымала.

Заньатисем сентйабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланассĕ.

АДРĔС: Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 82. Педрабфак, директăра.

ДИРЕКЦИ.

2—2

Н. Е. БАУМАН йачĕпе тăракан

ХУСАНТИ ГОСУДАРСТВĂ ЗООТЕХНИКĂПА ВЕТЕРИНАРИ ИНСТИТУЧĔ

1938—1939 вĕренÿ çулĕнче

СТУДЕНТСЕНЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ.

Икĕ факультета йышăнассĕ: 1) ЗООТЕХНИКĂ тата 2) ВЕТЕРИНАРИ ку факультетсенче пысăк квалификацилĕ специалиссене—зоотехниксемпе ветеринари врачсене хатĕрлессĕ.

Институтра вĕренмели срук тăватă çул.

Института пур граждансене те (арçынсене тата хĕрарăмсене) 17 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран, вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисене (вунă çуллă шкул, рабфак, техникум), йе екстернат йĕркипе вăтам шкултан вĕренсе тухни çинчен илнĕ аттестат пур пулсан илессĕ. Института илнĕ чух пурне те çак предметсем тăрăх испытани тăвассĕ: вырăс чĕлхи, политграмăтă, математикă, физикă, хими, географи тата вĕренме кĕрекен хăй килĕшнĕ тăрăх пĕр-пĕр йутçĕршыв чĕлхи. Вăтам шкула йе 10 çуллă шкула отличнă вĕренсе тухнисене çеç испытани тумасăрах илессĕ.

Зайавленисене августăн 1-мĕшĕччен йышăнассĕ, испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пулассĕ. Августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшĕччен института илнисене студентсен шутне кĕртессĕ.

Зайавленисене институт директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле йамала:

тĕплĕн çырнă автобиографи, вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат, виçĕ фото-картăчкă—кашнин çинче хăй ал пусса государствă учрежденинче çирĕплеттерни пулма кирлĕ тата çар тивĕçлĕхне (военнобйазаннăйсен) кăтартакан справкă, паспăрта пĕрле илсе пымала.

3—3 Адрĕс: гор. Казань, Поле Ершова, дом 22.

Шупашкарти коммуналă строител техникумĕ

1938—39 ВĔРЕНŸ ÇУЛĔНЧЕ

кĕркунне ĕçрен уйарăлса вĕренме пĕрремĕш курса 90 студент илесси çинчен пĕлтерет

Техникум граждăнла-коммуналă строительствăн ТЕХНИК-СТРОИТЕЛСЕНЕ ХАТĔРЛЕТ

Техникумра вĕренмели срук 3 çул та 10 уйăх

Вĕренме ССР Сойузĕнчи граждансене (арçынсене тата хĕрарăмсене) те 16 çулхисенчен пуçласа 30 çула çитнисем таран, 7 çул вĕреннисене илеççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсене пурне те, вăтам шкулпа рабфак пĕтернисемсĕр пуçне, çак предметсем тăрăх испытани тăвассĕ: математикă, вырăс чĕлхипе, литературă, физикă, географи, тата политграмăтă.

Испытанире вырăс чĕлхипе литературăна тата математикăна сăмахпа ыйтассĕ, тата çыртарассĕ, ытти предметсене сăмахпа ыйтассĕ.

Зайавленисене августăн 10-мĕшĕччен йышăнассĕ.

Зайавленипе пĕрле çакнашкал документсем кирлĕ:

Автобиографи, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнине кăтартакан свидетелствă (подлинник), хăçан çуралнине кăтартакан свидетелствă, икĕ фотокартăчкă—(кашни çинче хăй ал пусса государствă учрежденинче çирĕплетни пулма кирлĕ) çар тивĕçлĕхне (военнообйазаннăйсен) кăтартакан справкă, сывлăх çинчен справкă, паспăрт пĕрле илсе пымала.

Испытанисем августăн 13—20-мĕш кунĕсенче пулассĕ. Испытанине те вĕренме те техникум чĕннипе çеç пымала.

Заньатисем сентйабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланассĕ.

Вĕренме илнисене пурне те стипенди парассĕ. Техникумăн общежити, столовăй, парикмахĕрски тата кĕпе-йĕм çумали пур.

Ыйтусемпе зайавленисене 40 пуслăх почтă маркипе пĕрле çак адрĕспе йамала: Шупашкар хули, Чăваш АССР, Плеханăв урамĕ, 7, коммуналă строителствă техникумĕ.

ДИРЕКЦИ.

2—1

ХАРПĂРХАЙ ТĔЛЛĔН ВĔРЕНЕКЕНСЕН

ÇУЛЛАХИ ÇЕÇÇИЙĔ

Чăвашсен Педагогика Институчĕн харпăрхăй тĕллĕн (заочнă) вĕренекен пур курссен тата факультетсен студенчĕсен çуллахи итоглă çеççийĕ

1938 çулти ийулĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшĕччен пырат.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас ĕçсем тухнă пирки IV-мĕш курсри харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсен çеççийĕ ийунĕн 20-мĕшĕнче пуçланас вырăнне ийунĕн 29-мĕшĕнче пуçланат.

Студент билечĕсене тата зачот кĕнекисене (матрикулсене) хурмăлама харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен студентсен хăйсемпе пĕрле виçшер фотокартăчкă (3×4 сантиметр пысăкĕш çарапуçăн ÿкертерни) илсе килмеле. Пĕрлех вĕреннĕ материалсем тата паспăрт илсе килмеле.

Çулахи çеççине килмен заочниксен библиотекăран илнĕ кĕнекесене; учебниксене кайала йамала, мĕншĕн тесен, харпăрхăй тĕллĕн вĕренменнисене заочниксен шутĕнчен кăларассĕ.

ДИРЕКЦИ.

2—1

Чăвашполиграфтрестăн 1-мĕш № типографине

текст наборлама

НАБОРШЧИКСЕМ

КИРЛĔ

Ĕçукçи ĕçленĕ тăрăх. Пĕччеисене вальли хватерсем пур.

ДИРЕКЦИ.

2—1

Главнефтесбытăн Чăваш республикĕнчи кантурне

Йалан ĕçлеме

Аслă бухгалтĕр заместителĕ
Бухгалтĕр-финансист
Бухгалтĕр (тавар группи тăрăх)
Бухгалтĕр (расчот группи тăрăх)

КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх. 104-мĕш № телефонпа ыйтса пĕлмеле

2—1

ЧĂВАШСТРОЙТРЕСТРА

малтан ĕçлесе пурăннă рабочисене—ĕçукçи илейменнисене

укçа илме пыма чĕнессĕ

Укçа илме рабочин хăйĕн пымала йе почтă урлă çырупа хăш вăхăтра, мĕнле строителствăра, хăш бригадăра тата килти тĕрĕс адрĕсе тĕплĕн çырса пĕлтерсен, (пĕрлех мĕн чухнĕ ĕçленине кăтартакан расчот кĕнекине йе расчот хутне йамала), укçа йарассĕ.

Претензисем тăратмали срук çак пĕлтерÿ сапăннă кунранпа 1938 çулхи октйабĕрĕн 1-мĕшĕччен.

Чăвашстройтрест.

3—2

Чăвашсен Коммунисла Йалхуçалăх шкулне

Бухгалтĕрсем тата кассир кирлĕ

Адрĕс: Ленинградскайа урам, 3.

„Росснабсбыт“

Чăваш республикĕнчи уйрăмне

бухгалтĕрсем, счетоводсем тата кассир кирлĕ.

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.

Шупашкар, Хĕрлĕ площĕдь, 16.
Тел. № 1—13 тата 5—10.

2—2

Шупашкарти „Маслопром“ базине

Счетовод кирлĕ

Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Ленин урамĕ, 8-я. Дирекци патне.

„Чăвашвăрманпром“ трестне

автобазăсенче ĕçлеме

АСЛĂ МЕХАНИКСЕМ КИРЛĔ

Условисем килĕшÿ тăрăх. Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Урицкайа урам, 3. „Чăвашвăрманпром“ трест Кадрсен пайĕ.

2—1

Квалификацилĕ официантсем

кирлĕ

Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Кадыков урамĕ, 5. Пĕрлешÿлĕ апатланас тĕлĕшпе ĕçлекен уйрăм.

2—1

Шупашкарти корь станцине

йун паракансем кирлĕ.

Йуна сывлăха сийен кÿмеле мар 100—300 кубла сантиметр таран пама йурат.

100 кубла сантиметр йуншăн

30 тенкĕ тÿлессĕ.

Кашни кунах (канмали кунсемсĕр пуçне) ирхине 10 сехетрен пуçласа 2 сехетчен йышăнассĕ.

Адрĕс: Красноармейскайа урам, № 3 Сивчир станцийĕ.

2—2

Чăвашсен Государствă Академи театрĕн дирекцийĕпе профсойуз комитечĕ театр сотрудникĕн Тихăн Николайĕвич Плотникăвăн тăванĕ

Иван Николайĕвич Плотникăв

вилни çинчен пĕлтерсе, Тихăн Николайĕвичпа пĕрле хуйхăрассĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 249.

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 408.